ПӖТӖМ ТӖНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПӖРЛЕШӖР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВӖ

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Чӑваш обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗпе Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ

1953 ҫул Февраль 17
ЫТЛАРИКУН
№ 33 (8942)
35-мӗш ҫул тухать.
Хакӗ 20 пус.

Рабочисем, хресченсем, интеллигенци! Ӗҫҫынни депутачӗсен вырӑнти Совечӗсен суйлавне производствӑри ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсемпе кӗтсе илер!

Партилле пропагандӑн чи пысӑк задачи

Сталин юлташ «ССР Союзӗнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем» ятлӑ гениаллӗ произведенире социализмран коммунизма куҫмалли ҫулсемпе условисене тӗплӗн кӑтартса пачӗ. Партин XIX-мӗш съезчӗ коммунизм строительстви тӗлӗшпе йышӑннӑ решенисенче Сталин юлташӑн ҫав кӑтартӑвӗсем тӗп вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ.

Социализмран коммунизма куҫнӑ тапхӑрта парти умӗнче тӑракан задачӑсене палӑртнипе пӗрлех съезд идеологиллӗ ӗҫӗн пӗлтерӗшӗ пысӑк пулнине кӑтартса пачӗ. Съезд парти организацийӗсене идеологиллӗ ӗҫе хакламаннине пӗтерме, идеологиллӗ йӑнӑшсемпе пӑсӑклӑхсем ҫине либералла пӑхнине хирӗҫ татӑклӑн кӗрешме, хамӑрӑн кадрсене идейӑпа политика тӗлӗшӗнчен вӗрентсе хатӗрлес ӗҫе пӗрмаях вӑйлатса, лайӑхлатса пыма, совет ҫыннисене коммунизмла воспитани парас ӗҫре идеологиллӗ вӑйӑн мӗнпур хатӗрӗсемпе усӑ курма хушса хӑварчӗ.

Идеологиллӗ ӗҫ партин чи пысӑк обязанноҫӗ пулса тӑрать, ку ӗҫе хакламанни партипе государство интересӗсене питех те пысӑк сиен кӳме пултарать. Ленинец, тесе вӗрентет Сталин юлташ, наукӑн хӑй юратса илнӗ отраслӗн специалисчӗ кӑна пулма пултараймасть, вӑл, ҫавӑнпа пӗрлех, хӑйӗн ҫӗршывӗн кун-ҫулӗпе ҫывӑх интересленекен, общество аталанӑвӗн законӗсене пӗлекен, ҫав законсемпе усӑ курма пӗлекен тата ҫӗршывӑн политикӑллӑ руководствине активлӑн хутшӑнса ӗҫлеме тӑрӑшакан политик-общественник пулмалла.

Пирӗн парти вӑйӗ—вӑл хӑйӗн мӗнпур ӗҫӗсене малта тӑракан марксистла-ленинла наука вӗрентнӗ тӑрӑх туса пынинче пулать. Партин тӗп кадрӗсем марксистла-ленинла теорие тӗрӗс пурнӑҫласа пырас ӗҫре питех те паха тӗслӗх кӑтартрӗҫ тата халӗ те кӑтартаҫҫӗ. Вӗсем, теориллӗ ӗҫпе практикӑллӑ ӗҫе тачӑ ҫыхӑнтарса, политикӑллӑ кӗрешӗвӗн пысӑк тӗрӗслевӗсене тӳсӗмлӗн ирттерчӗҫ. Теорие вӗренсе ӑнланса илес ӗҫре ҫамрӑк кадрсен ваттисенчен вӗренсе пымалла, хӑйсене идейӑпа политика тӗлӗшӗнчен ӳсӗхтерме тӑрӑшмалла.

«ССР Союзӗнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем» ятлӑ произведенире Сталин юлташ ҫапла кӑтартса пачӗ: «...пирӗн пата, ертсе пыракан тӗп йыш патне, кашни ҫулах ҫӗнӗ те ҫамрӑк кадрсем килсе хутшӑнаҫҫӗ, вӗсем пире пулӑшас кӑмӑлпа ҫунаҫҫӗ, хӑйсене ӗҫре кӑтартас кӑмӑлпа ҫунаҫҫӗ, анчах та вӗсен марксистла пӗлӳлӗх ҫителӗксӗр, вӗсем пирӗн пӗлекен чӑнлӑхсене чылайӑшне пӗлмеҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсен ирӗксӗрех тӗттӗмлӗхре ҫӳрӗтсе ҫӳреме тивет... Мӗн тумалла-ха пирӗн ҫав юлташсемпе? Мӗнле майпа вӗсене марксизм-ленинизм шухӑшӗ майлӑ воспитани памалла? «Пуриншӗн те паллӑ» чӑнлӑхсем текен «чӑнлӑхсене» тӑтӑшах аса илтерсе тӑни, ҫав чӑнлӑхсем ҫинчен чӑтӑмлӑн ӑнлантарса пани ҫав юлташсене марксистла воспитани памалли чи лайӑх майсенчен пӗри пулса тӑрать, тесе шутлатӑп эпӗ».

Хальхи вӑхӑтра парти организацийӗсем ҫумӗнчи политшкулсемпе кружоксенче Сталин юлташӑн «ССР Союзӗнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем» ятлӑ произведенине тата КПСС XIX-мӗш съезчӗн материалӗсемпе решенийӗсене вӗренеҫҫӗ. Партилле пропагандӑна ҫӗнӗ программа тӑрӑх йӗркелени парторганизацисемпе пропагандистсем умне пысӑк та ответлӑ задачӑсем кӑларса тӑратрӗ. Вӗсен пирӗн кадрсене, коммунистсене тата партире тӑман активистсене Сталин юлташӑн ҫӗнӗ произведенийӗнчи аслӑ идейӑсем ҫинчен, съезд йышӑннӑ историллӗ решенисем ҫинчен тӗплӗн ӑнлантарса пама тӑрӑшас пулать. Ҫакӑ вӑл коммунизм строителӗсен политикӑллӑ активлӑхне тата ӗҫри пуҫарулӑхне ӳстерме май патӑр, ҫӗршыв умӗнче тӑракан задачӑсене пурнӑҫлас ӗҫе ӑнланулӑн та хастарлӑн хутшӑнма май патӑр.

Калас пулать, партилле пропаганда тӗлӗшпе нумай парторганизацисенче чылай ҫитменлӗхсем пурри палӑрчӗ. Сӑмахран, КПСС Шупашкар райкомӗ партилле пропагандӑна ҫӗнӗлле йӗркелес тӗлӗшпе ку тарана ҫитсе те кирлӗ мерӑсем йышӑнман. Ҫавна пула хӑшпӗр колхозсенчи (тӗслӗхрен «Серп и молот», «Коммунизм», «Победа» тата ытти колхозсенчи) парторганизацисем ҫумӗнчи политшкулсемпе кружоксенче вӗренекенсем занятисене сиктерсе ҫӳреҫҫӗ, занятисене тепӗр куна куҫарни те час-часах пулать.

КПСС райкомӗ занятисене идейӑпа политика тӗлӗшӗнчен ҫӳлӗ пусӑмра ирттерес ӗҫре пропагандистсене кирлӗ пулӑшу памасть. «Коммунизм» колхозри парторганизаци ҫумӗнчи кружок руководителӗ Егоров юлташ, XIX-мӗш съездӑн юлашки ларӑвӗнче Сталин юлташ каланӑ историллӗ сӑмах пӗлтерӗшӗ ҫинчен тӗплӗн ӑнлантарса парас вырӑнне, ҫак сӑмаха сасӑпа вуласа пачипех лӑпланнӑ. Ҫакӑн пек ҫитменлӗхсем парти райкомӗ идеологиллӗ ӗҫе тивӗҫлипе хакламан пирки кӑна пулма пултарнӑ.

Политшкулсемпе кружоксенчи политикӑллӑ вӗренӳ ҫӗнӗ программа тӑрӑх йӗркеленӗ май, пропагандистсене нихҫанхинчен те лайӑхрах пулӑшни кирлӗ. Пропагандист вӑл партиллӗ вӗренӳре тӗп вырӑн йышӑнса тӑрать. Пропагандистсене марксистла-ленинла теорие тарӑнрах ӑнланса илме, ун ҫинчен вӗренекенсене тӗплӗн каласа пама пулӑшас тесе, вӗсемпе тӑтӑшах семинарсем ирттерес пулать. Семинарсенче пропагандистсем идейӑпа политика тӗлӗшӗнчен ҫӳлӗ пусӑмра тӑракан политикӑллӑ докладсем итлетчӗр, занятисене ирттерме методикӑллӑ кӑтартусем илчӗр.

Парторганизацисем пропагандистсен кадрӗсене сахал вӗрентсе хатӗрлерӗҫ теме ҫук. Занятисене идейӑпа политика тӗлӗшӗнчен ҫӳлӗ пусӑмра ирттерекен пропагандистсем пирӗн сахал мар. Анчах парторганизацисем пропаганда ӗҫӗнчи лайӑх опыта пӗтӗҫтерес тӗлӗшпе сахал ӗҫлеҫҫӗ-ха.

Пирӗн нумай кадрсемпе коммунистсем теорие харпӑр хӑй тӗллӗн вӗренеҫҫӗ. Вӗсенчен нумайӑшӗ Сталин юлташӑн классикӑлла ҫӗнӗ ӗҫне тата съезд материалӗсемпе решенийӗсене вӗренес тӗлӗшпе харпӑр хӑй тӗллӗн ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем мӗнле вӗреннине куллен тӗрӗслесси тата харпӑр хӑй тӗллӗн вӗренекенсене кирлӗ пулӑшу парасси—парторганизацисен тивӗҫӗ пулса тӑрать. КПСС райкомӗсем ҫумӗнчи докладчиксен ушкӑнӗсем харпӑр хӑй тӗллӗн вӗренекенсене пулӑшас майпа пысӑк ӗҫсем туса ирттерме тивӗҫлӗ. Идея тӗлӗшӗнчен ҫӳлӗ пусӑмра ирттернӗ лекцисем кадрсен пӗлӗвӗсене ӳстерес ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Апла пулин те КПСС хӑшпӗр райкомӗсем докладсемпе лекцисене кирлӗ шайра ирттерме тӑрӑшмаҫҫӗ. КПСС Сӗнтӗрвӑрри райкомӗ ҫумӗнчи докладчиксен ушкӑнӗнче, сӑмахран, хатӗрлесе ҫитернӗ лекцисемпе докладсен тексчӗсене пӑхса тухса ҫӳтсе явмаҫҫӗ, ҫавна пула лекциллӗ пропагандӑн идейӑллӑ пахалӑхӗ тивӗҫлӗ вырӑнта тӑмасть.

Парти комитечӗсем ҫумӗнчи докладчиксен ушкӑнӗсем чӑн-чӑн творчествӑллӑ коллективсем пулса тӑмалла. Кашни докладӑн е лекцин хатӗрлесе ҫитернӗ тексчӗсене чи малтан пӗрле пухӑнса ҫӳтсе явмалла. Ҫапла туни кӑна лекциллӗ пропагандӑна тивӗҫлӗ пусӑма лартма май парӗ.

Халӗ, экономикӑллӑ питех те пысӑк проблемӑсене татса пама кирлӗ чухне, марксизмӑн экономикӑллӑ теорине лайӑх ӑнланса илес задача тухса тӑчӗ. Экономикӑллӑ теорие лайӑх пӗлмесӗр, социализмлӑ производство аталанӑвӗн законӗсене тӗплӗн пӗлмесӗр малашнехи аталану мӗнле пулса пырассине пӗлсе тӑма, практикӑллӑ ӗҫсене ӑнӑҫлӑн туса пыма май ҫук. Ҫавӑнпа та Сталин юлташӑн «ССР Союзӗнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем» ятлӑ произведенине тӗплӗн ӑнланса илесси, ҫав ӗҫри кӑтартусене куллен пурнӑҫласа пырасси пирӗн коммунистсемпе кадрсен пысӑк тивӗҫӗ пулать.

КПСС Вӑрнар райкомӗн нумай пулмасть пулса иртнӗ пленумӗ колхозсене тата промышленность предприятийӗсене ертсе пырас ӗҫре райкомӑн пысӑк ҫитменлӗхсем пуррине кӑтартса пачӗ. Ҫакӑ вӑл райком кадрсен экономикӑллӑ пӗлӗвне ӳстерме тӑрӑшманнинчен те чылай килнӗ. Райком секретарӗсем колхозсемпе предприятисенче сахал пулаҫҫӗ, вӗсен экономикине тӗплӗн пӗлмеҫҫӗ. Пленум участникӗсем КПСС райкомне идеологиллӗ ӗҫе лайӑхлатма мерӑсем йышӑнманнишӗн хытӑ критиклерӗ.

Сталин юлташ ҫапла асӑрхаттарчӗ: общество членӗсене общество аталанӑвӗн активлӑ деятелӗсем пулма вӗрентесси коммунизма куҫма кирлӗ условисенчен пӗри пулать. Парти организацийӗсен тивӗҫӗ вӑл—кадрсене, мӗнпур коммунистсене, ӗҫҫыннисен аслӑ массисене партин XIX-мӗш съезчӗ йышӑннӑ решенисемпе, Сталин юлташ коммунизм строительстви ҫинчен вӗрентнипе хӗҫпӑшаллантарасси пулать. Коммунизм строительствин пысӑкран та пысӑк программине пурнӑҫлас тесен, парторганизацисен идеологиллӗ ӗҫе историллӗ задачӑсен ҫӳлӗшне, пирӗн партипе совет халӑхӗ умӗнче тӑракан аслӑ задачӑсен ҫӳлӗшне ҫӗклемелле.

Вырӑс чӗлхин словарӗ

СССР Наука академийӗн чӗлхе институчӗн словарьсем тӗлӗшпе ӗҫлекен секторӗ хальхи вӑхӑтри вырӑс литература чӗлхин кӗске словарьне хатӗрлеме тытӑннӑ. Виҫӗ томлӑ словаре 100 пин сӑмах ытла кӗмелле. Сӑмахсене ӑнлантарса пама илемлӗ литература, публицистика тата наука произведенийӗсенчен сыпӑксем илсе пичетлеҫҫӗ.

Совет Союзӗ тӑрӑх

Бетон хума пуҫлас умӗн

СӖНӖ КАХОВКА. Шлюз котлованӗ варринче вырнаҫтарса лартнӑ хӑма ҫине ҫапла ҫырса хунӑ: «Кунта Каховка ГЭС-ӗн шлюзне хуракан бетонӑн малтанхи кубометрне хумалла». Ҫак вырӑнта гидростроительсем уйрӑмах тимлӗн ӗҫлеҫҫӗ.

Котлована пӗрмаях шыв тулса тӑрать. Шлюз тӗпне бетон хума ҫав шыва типӗтес пулать. Ку ӗҫе тума Александр Погорелов ертсе пыракан монтажниксем татах насуссем вырнаҫтарса лартма тытӑннӑ. Котлован тӗпӗнче икӗ сий пӗренесем сарса ҫул тӑваҫҫӗ. Ҫав ҫул тӑрӑх арматура, хӑма тата бетон турттармалла пулать.

Таллин хулине газ пырса тӑма пуҫланӑ

ТАЛЛИН, февралӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Паян Советлӑ Эстонири ӗҫҫыннисен савӑнӑҫлӑ праҫникӗ—хулана Кохтла-Ярверен газопровод тӑрӑх газ пырса тӑма пуҫланӑ.

Партин XIX-мӗш съезчӗ пиллӗкмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе панӑ директивӑсем тӑрӑх тума йышӑннӑ газопровода—Кохтла-Ярве — Таллин газопроводне малтан палӑртнинчен ҫур ҫул маларах туса пӗтернӗ.

150 километр тӑршшӗ яхӑн газопровод тӑвакансем траншейӑсенчен 400 пин кубометра яхӑн ҫӗр чавса кӑларнӑ тата 1,5 миллион кубометра яхӑн шыв уҫласа кӑларнӑ. Ҫак ӗҫе хӑватлӑ техникӑпа — экскаваторсемпе, бульдозерсемпе, автокрансемпе тата шыв уҫламалли помпӑсемпе ӗҫлесе тунӑ. Металран тунӑ трубасем 7 пин тонна ытла хунӑ.

Буржуаллӑ Эстони пысӑк газопровод тума вӑй ҫитереймен. Советлӑ Эстони ҫеҫ, ытти тӑванла советлӑ республикӑсем пулӑшнипе, ҫакӑн пек пысӑк ӗҫе тума пултарчӗ.

Халӗ ӗнтӗ Таллин хулинчи 3 пин хваттере газ пырса тӑрать. Мунчасем, прачечнӑйсем, ҫӑкӑр завочӗсем тата ытти предприятисем газпа ӗҫлеме тытӑнаҫҫӗ. Ҫак пилӗкҫуллӑх иртнӗ тӗле хулана пӗтӗмпех газ кӗртсе ҫитереҫҫӗ.

Паян Сталин ячӗпе тӑракан площадьре ӗҫҫыннисен пысӑк митингӗ пулса иртнӗ. Митингра пулнисем питӗ пысӑк ҫӗкленӳпе Эстонири ӗҫҫыннисен чи лайӑх тусӗ патне—И. В. Сталин юлташ патне саламлӑ ҫыру яма йышӑннӑ.



Таджикистанра хӗрлех ҫуртыррисемпе йӗтӗн-кудряш акаҫҫӗ.

УКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Даган-Киик районӗнчи «Правда» колхоз хирӗнче йӗтӗн-кудряш акаҫҫӗ. Даган-Киик машина-трактор станцийӗнчи механизаторсем ӗҫлеҫҫӗ.

Б. ЗАЙЦЕВ фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Канал тӑвакансен ҫӗнӗ поселокӗ

ВОЛЖСКИ ПОСЕЛОКӖ. Атӑл леш енчи ҫеҫенхирте, Атӑлпа Урал хушшинчи тӗп каналӑн 151 километрӗнче, Сайхин станцинчен инҫе мар, канал строителӗсен ҫӗнӗ поселокӗ ӳссе пырать.

Ҫурҫул каялла, Сталинград облаҫӗпе Казахстан чиккинче, канал строительствин 14-мӗш участокӗнче ӗҫлекенсен малтанхи палаткисене карнӑ. Ҫав вӑхӑтрах малтанхи ҫуртсен никӗсне хывнӑ. Ҫӗнӗ ҫула строительсем ӑшӑ та ҫутӑ хваттерсенче кӗтсе илнӗ. Вӗсем валли 7 пин тӑваткал метр чухлӗ пурӑнмалли ҫуртсем тунӑ. Поселокра электричество ҫутти пур, радио ӗҫлет.

Сивӗ хӗллехи йывӑрлӑхсене пӑхмасӑр, январьпе февраль уйӑхӗсенче те строительство ӗҫӗн хӑвӑртлӑхӗ чакман. Халӗ кунта нумай хваттерлӗ пилӗк чул ҫурт тӑваҫҫӗ. Ҫуркунне ҫитнӗ тӗле, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, пурӑнмалли ҫуртсем икӗ хут ытларах туса пӗтереҫҫӗ. Каменщиксен, платниксен, штукатурсен бригадисем стахановла ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем кашни кунах строительство ӗҫӗсене графикран ирттерсе тӑваҫҫӗ.

Ҫуркунне кунта экскаваторщиксем, скреперистсем, бульдозеристсем килеҫҫӗ. Механизаторсем тарӑн канал чавма тытӑнаҫҫӗ.

(ТАСС).

Кузбасс центрӗнче

КЕМЕРОВО. Кузбасс центрӗ—Кемерово хули хӑвӑрт ӳссе тата лайӑхланса пырать. Вырӑнти Советсен иртнӗ суйлавӗ пулнӑранпа хула варринче нумай хутлӑ ҫуртсем туса лартнӑ, хулара ҫӗнӗ урамсемпе кварталсем пулса тӑнӑ. Юлашки икӗ ҫул хушшинче Кемерово хулинчи ӗҫҫыннисем валли пурӑнмалли ҫуртсем 50 пин тӑваткал метр ытла тунӑ.

Хулара шкулсен, клубсен, больницӑсен, ача сачӗсен шучӗ ӳснӗ. Хулана илемлетес тӗлӗшпе нумай ӗҫленӗ. Вуншар километр тӑршшӗ ҫулсене асфальт сарса хытарнӑ. Иртнӗ ҫулта Томь юханшывӗ урлӑ ҫӗнӗ кӗпер хывнӑ, вӑл шахтерсем пурӑнакан района хула центрӗпе ҫыхӑнтарать. Ӗҫҫыннисен хваттерӗсене ӑшӑ парса тӑмалла тума пуҫланӑ.

Хулара ҫӗнӗ стройкӑсем нумай. Кӑҫалхи ҫул кунта 87 пурӑнмалли ҫурт тума тытӑнмалла. Вӑл шутра 40 ҫурчӗ нумай хутлӑ ҫуртсем пулаҫҫӗ, вӗсенче мӗн пурӗ 100 пин тӑваткал метра яхӑн пурӑнмалли вырӑн пулать, Кунсӑр пуҫне культурӑпа йӑла учрежденийӗсем валли 49 ҫурт лартма палӑртнӑ. (ТАСС).

СОВЕТ ҪАРӖПЕ ТИНӖС-ҪАР ФЛОЧӖ 35 ҪУЛ ТУЛТАРАС УМӖН

КАЛИНИНГРАД. Облаҫра Совет Ҫарӗпе Тинӗс-Ҫар Флочӗ 35 ҫул тултарнине кӗтсе илме хатӗрленесси сарӑлса пырать.

Досааф комитечӗсем пӑшалтан тӗл перекенсен тата йӗлтӗрҫӗсен ӑмӑртӑвӗсене организацилеҫҫӗ. Хулари Досааф членӗсем 1945 ҫулхи апрель уйӑхӗнче Совет Ҫарӗн дивизийӗсем пысӑк паттӑрлӑхпа Кенигсберг хулине штурмланӑ вырӑнсене йӗлтӗрпе кайса курнӑ.

Хулари ҫамрӑксем Сталинград патӗнчи ҫапӑҫусене, Кенигсберг тата Берлин хулисене штурмланӑ ҫӗре хутшӑннӑ геройсемпе тӗл пулаҫҫӗ.

ЛЬВОВ. Облаҫри библиотекӑра пысӑк выставка уҫӑлнӑ. Выставкӑри литература, фотоӳкерчӗксем тата документсем ССР Союзӗн Хӗҫпӑшаллӑ Вӑйӗсен паттӑр историне кӑтартса параҫҫӗ.

Культура ҫуртӗнче, клубсемпе библиотекӑсенче тата облаҫри ялсенче те Совет Ҫарӗпе Тинӗс-Ҫар Флочӗ 35 ҫул тултарнӑ ятпа выставкӑсем уҫӑлаҫҫӗ. (ТАСС).

Заводри поэтсемпе писательсем

ХАРЬКОВ, февралӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Заводри «Темп» ятлӑ хаҫата трактор заводӗнчи нумай пин ҫынлӑ коллектив юратса вулать. Рабочисем «Литература страницине» вулама уйрӑмах юратаҫҫӗ. Заводри поэтсемпе писательсем стахановецсен производствӑри ӗҫӗ ҫинчен калавсем, очерксем, сӑвӑсем ҫыраҫҫӗ.

Виҫҫӗмӗш термически участок работникӗ Щеблыкин ҫырнӑ калав «Отделени начальникӗ» ятлӑ, ӑна заводри хаҫатра пичетлесе кӑларнӑ. Калав авторӗ цехри кая юлнӑ участок, унта ӗҫлеме партком парти ретӗнче тӑракан мастера уйӑрса янӑ хыҫҫӑн, мала тухни ҫинчен каласа парать. Рабочисем тӑрӑшса ӗҫленипе, ӗҫе тӗрӗс организациленипе ҫав участок мала тухакан участоксен шутне кӗнӗ.

Трактор цехӗнчи слесарь А. Рожков «Пирӗн тост», «Тракторист ҫинчен шухӑшлани», «Мир ҫӗнтерет», «Атӑл—Дон каналӗ» ятлӑ тата ытти нумай сӑвӑсем те ҫырнӑ.

Заводри литература кружокӗ пилӗк ҫул хушши ӗҫлет. Кружок членӗсем литература историйӗ ҫинчен лекцисем итлеҫҫӗ, хӑйсен произведенийӗсене ҫӳтсе яваҫҫӗ. Ятарласа кӑларнӑ сборникре, облаҫри хаҫатсенче, «Советская Украина» тата «Днипро» журналсенче заводри авторсем ҫырнӑ 200 ытла произведени пичетленсе тухнӑ.

Тӑван ҫӗршыва йывӑҫ ытларах хатӗрлесе парар!

Уйӑхлӑха хутшӑнаҫҫӗ

МУРКАШ, февралӗн 16-мӗшӗ. (Телефонпа). Кунта ял Совечӗсемпе колхоз председателӗсен тата колхозсенчи пуҫламӑш парторганизаци секретарӗсен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлу кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра вӑрман хатӗрлемелли плана тултарса ҫитермелли стахановла уйӑхлӑха хутшӑнма, государство заданине мартӑн 1-мӗшӗ тӗлне пурнӑҫлама йышӑнчӗ. Панӑ сӑмаха пурнӑҫлама районти колхозсем вӑрмана 500 ҫын ҫуран ӗҫлекен, 300 ҫын лавпа ӗҫлекен уйӑрса яма пулчӗҫ.

Уйӑхлӑх ирттересси ҫинчен ӑнлантарса пама ял Совечӗсемпе колхозсене районти партипе совет активисчӗсем тухса кайрӗҫ.

П. ПЕТРОВ.

Плана тултарнӑ

ВӐРНАР. Вырӑнти Советсен суйлавӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, «Правда» колхоз членӗсем вӑрман касмалли, турттармалли тата ҫул хӗррине илсе тухмалли плана срокчен тултарчӗҫ, хӑйсен тивӗҫне чыслӑн пурнӑҫларӗҫ.

Колхоз правленийӗпе пуҫламӑш парторганизаци вӑрман хатӗрлевне ертсе пыма опытлӑ колхозниксене уйӑрса ячӗҫ. Вӑрман касакансен бригадине И. Григорьев комсомолец, йывӑҫ турттаракансен бригадине М. Павлов коммунист ертсе пычӗҫ. Йывӑҫ касса хатӗрлекенсен бригади сезон пуҫланнӑранпа пӗр улшӑнмасӑр ӗҫлерӗ.

Йывӑҫ турттарнӑ ҫӗрте В. Егоров, Д. Яковлев, Г. Вотяков, П. Степанов, Н. Иванов, М. Петров, В. Журавлев, В. Петров колхозниксем лайӑх тӗслӗх кӑтартрӗҫ, куллен виҫшер хутласа 5-шер фестметр ытла йывӑҫ турттарчӗҫ.

Г. МАТВЕЕВ.

Йӗпреҫ районӗ юлса пынине пӗтермелле

Иртнӗ ҫулсенче Йӗпреҫ районӗ вӑрман хатӗрлемелли плана ӑнӑҫлӑ тултарса пычӗ. Ку сезонта район, ӑна иртнӗ ҫулхисенчен пӗчӗкрех задани панӑ пулин те, юлса пырать. Райсовет исполкомӗ государство заданине пурнӑҫлама колхозниксене мобилизацилемен, ӗҫ хӑй тӗллӗн пырасса ытларах шанса ларнӑ. Ял Совет председателӗсемпе колхоз председателӗсем районти работниксен шухӑш-туйӑмне хӑвӑрт сисеҫҫӗ. — Вӑрман хатӗрлесси пирӗншӗн ҫӗнӗ ӗҫ мар, кӑҫалхинчен пысӑкрах плана та ҫулсерен тултарса пынӑ. Ытла хыпса ҫунма кирлӗ мар пулӗ,—тетчӗҫ кӗркунне хӑшпӗр ял Совет председателӗсем.

Кирек мӗнле ӗҫре те ӑнӑҫлӑха руководительсем хӑйсем ответлӑх туйни, ҫынсене мобилизацилеме пӗлни татса парать. Чылай ял Совечӗсемпе колхоз правленийӗсем кӗркуннехи вӑхӑтпа кирлӗ пек усӑ курмарӗҫ. Райсовет исполкомӗ вӗсен йӑнӑшне ҫийӗнчех тӳрлетмерӗ. Ҫапла район республикӑна каялла туртакан районсенчен пӗри пулса тӑчӗ.

Февралӗн 10-мӗшӗ тӗлне вӑл йывӑҫ касса хатӗрлемелли плана 40 процент, каснӑ йывӑҫа ҫул хӗррине илсе тухмалли плана 21 процент, турттарса кӑлармалли плана 25 процент ҫеҫ тултарнӑ. 1951 ҫулхи февралӗн 10-мӗшӗ тӗлне район йывӑҫ касса хатӗрлемелли плана 77,6 процент, каснӑ йывӑҫа ҫул хӗррине илсе тухмалли плана 87,3 процент, турттарса кӑлармалли плана—71,5 процент тултарнӑ пулнӑ. Урӑхла каласан, кӑҫал ӗҫ ик-виҫӗ хут япӑхрах пырать. Икӗ ҫул хушшинче районта ӗҫ вӑйӗпе туртӑм вӑйӗ чылай ӳснӗ, колхозсем автомашинӑсем сахал мар туяннӑ.

Плана ӑнӑҫлӑ тултарас тесен районтан куллен пӗр пин ҫынна яхӑн ӗҫлемелле. Февралӗн 12-мӗшӗнче пурӗ те 113 ҫын ӗҫленӗ. Вӗсенчен 44-шӗ ҫеҫ йывӑҫ турттарнӑ. Райисполком ял Совечӗсемпе колхоз председателӗсене ҫителӗклӗ пулӑшу памасть, совет активне, депутатсене ӗҫе хутшӑнтармасть, малта пыракансен опытне сармасть.

Чӑрӑшкасси ял Совечӗ вӑрман хатӗрлевӗ ҫинчен сессисенче ҫӳтсе явмасть. Ял Совет председателӗ Павлов юлташ ялти активран уйрӑлса кайнӑ. Ку ял Советри «Х лет Октября» колхоз вӑрман хатӗрлес тӗлӗшпе юлса пырать.

Райсовет исполкомӗн пӗр ларӑвӗнче Павлов юлташ плана январӗн 1-мӗшӗ тӗлне тултарма сӑмах панӑ. Исполком членӗсене ҫакӑ кӑмӑла кайнӑ. Ҫавӑнпа исполком витӗмсӗр решени ҫеҫ йышӑннӑ. Райисполком куллен тӗрӗслесе тӑманнипе Павлов юлташ хӑйӗн сӑмахне маннӑ, колхозниксене мобилизацилеме тӑрӑшман. Февралӗн 10-мӗшӗ тӗлне колхоз йывӑҫ касмалли плана 39 процент кӑна тултарнӑ. Задани тӑрӑх 1.000 кубометр йывӑҫ ҫул хӗррине илсе тухмалла. Колхоз ҫак заданине пурнӑҫлама тытӑнман та. Ытти нумай колхозсем те япӑх ӗҫлеҫҫӗ. 21 колхозран 8 колхоз каснӑ йывӑҫа ҫул хӗррине илсе тухма тытӑнман.

Райсовет исполкомӗ вӑрман хатӗрлевне ҫителӗксӗр ертсе пынине КПСС Йӗпреҫ райкомӗ пӗлет, анчах ӗҫре татӑклӑ улшӑну тума, колхозсенчи пуҫламӑш парторганизаци секретарӗсен ответлӑхне ӳстерме тӑрӑшмасть. Вӑрманта коммунистсем, агитаторсем сахал. Йӗпреҫ районӗнче вӑрман нумай. Кунта «Чӑвашвӑрман» треста пӑхӑнса тӑракан вӑрманпромхозсем, иккӗ. Кунсӑр пуҫне вӑрман хатӗрлекен ытти предприятисем те сахал мар. КПСС райкомӗн вӑрман хатӗрлевӗпе ытларах интересленмелле, государство заданине вӑхӑтра пурнӑҫлассишӗн вӑрманпромхозсен руководителӗсемпе райсовет исполкомӗн ответлӑхне ӳстермелле.

П. ИВАНОВ.

Ӑмӑрту вӑйланать

Чӑваш АССР Вырӑнти топливо промышленность управленине пӑхӑнса тӑракан Кире вӑрманпромхозӗ 1952 ҫулхи производство планне ӑнӑҫлӑ тултарчӗ, вӑрман сахал облаҫсене ӗҫе юрӑхлӑ йывӑҫ ӑсатмалли задание те чылай пурнӑҫларӗ. Кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра йывӑҫ касса хатӗрлемелли плана 86 процент, турттарса кӑлармалли плана 58 процент тултарнӑ. Шоферсем тата электропӑчкӑпа йывӑҫ касакансем уйрӑмах тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Механизмсемпе йывӑҫ хатӗрлемелли план тӑтӑшах тулса пырать.

Вӑрманпромхоз коллективӗ тата тухӑҫлӑрах ӗҫлеме пулать, шалти резервсене палӑртать. Кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра вӑрман хатӗрлемелли плана ӑнӑҫлӑ тултармалла тӑвас тесе, коллектив февралӗн 20-мӗшӗпе мартӑн 20-мӗшӗ хушшинчи стахановла уйӑхлӑха хутшӑнма йышӑнчӗ. Йывӑҫ касса хатӗрлемелли тата турттарса кӑлармалли плана уйӑхлӑх вӑхӑтӗнче тултарма социализмлӑ обязательство илнӗ.

Вырӑнти Советсен суйлавӗ ячӗпе вӑрманпромхозра ӑмӑрту куллен-кун вӑйланса пырать.

З. РОДИОНОВА.

Колхозниксен парни

Чкаловски районӗнчи «Гвардеец» колхоз членӗсем йывӑҫ касса хатӗрлемелли плана ирттерсе тултарнӑ. Халӗ чылай колхозниксем лавсемпе тата автомашинӑпа йывӑҫ турттараҫҫӗ. И. Зайцевпа Н. Павлов шоферсем ӗҫ нормине куллен 120—125 процент тултараҫҫӗ, ытти колхозниксем те тухӑҫлӑ ӗҫлеҫҫӗ.

Артель членӗсем вырӑнти Советсен суйлавӗ ячӗпе Тӑван ҫӗршыва парне пама—йывӑҫ турттарса кӑлармалли плана ирттерсе тултарма тӑрӑшаҫҫӗ.

«АВАНГАРД» хаҫатран.

Февралĕн 22-мĕшĕ—вырăнти Советсене суйламалли кун

Агитпунктсенче

ШĂХАСАН. Сурăмри суйлав участокĕн агитпункчĕ вулав сурчне вырнаçнă. Ăна лозунгсемпе илемлетнĕ. Кунта кашни кунах халăх нумай пухăнать: хăшĕсем çĕнĕ хаçат-журналсем вулаççĕ, теприсем хăйсене интереслентерекен ыйтусем çине ответсем илеççĕ.

Агитпунктра час-часах çамрăк суйлавçăсен каçĕсем пулаççĕ, кино кăтартаççĕ. Çавăнпа пĕрлех кунта калаçусем, лекцисемпе докладсем иртереççĕ. Суйлав кампанийĕ пуçланнăранпа «Вырăнти Советсен суйлавĕ», «Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче тунă отчетлă доклад», «Тĕнчери лару-тăру» тата ытти темăсем тăрăх та лекцисемпе докладсем иртернĕ.

Вырăнти Советсен суйлавне хатĕрленнĕ май суйлавçăсем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕç сарăлсах пырать. Агитколлектив руководителĕ Ф. Егоров юлташ агитаторсемпе час-часах калаçусем иртерет. Агитаторсен черетлĕ семинарĕнче КПСС Шăхасан райкомĕн секретарĕ А. Чикмяков юлташ «Вырăнти Советсен суйлавĕ тата агитаторсен задачисем çинчен» доклад туса пачĕ.

Агитколлектив 20 агитатора пĕрлештерсе тăрать. Вĕсене уйрăм участоксем çирĕплетсе панă. Н. Семенов, М. Григорьев тата Р. Миронова агитаторсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем хăйсене çирĕплетсе панă участоксенчи суйлавçăсем хушшинче 6—7-шер калаçу иртернĕ. Учитель-агитатор Р. Миронова юлташ суйлавçăсем хушшинче «Суйлав Положенийĕ», «СССР-ти граждансен пĕртанлăхĕ» çинчен тата пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана иртерсе тултарассишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçленипе Совет государствин экономикăллă вăй-хăватне малалла тĕреклетсе пырасси—мĕнпур совет çыннисен патриотла тивĕçĕ çинчен калаçусем иртернĕ. Вăл суйлавçăсене тĕнчери лару-тăру çинчен те тăтăшах ăнлантарса парать. Калаçусенче илемлĕ литературăпа анлăн усă курать.

Агитаторсем колхозниксене вырăнти Советсен суйлавне колхоз производствинче çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме хавхалантараççĕ. Юлашки вăхăтра колхозра сурăхине хатĕрленес ĕç чылай вăйланчĕ. Колхозниксем суйлав кунĕ тĕлне кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана тултарас тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлеççĕ.

Туçи Çармăсри агитпункт лайăх ĕçлет. Вăл 30 агитатора пĕрлештерсе тăрать. Агитаторсенчен чылайăшĕ учительсемпе ялти комсомолецсем.

Агитаторсене вунă килсем сумне çирĕплетнĕ. Вĕсем суйлавçăсене суйлав Положенийĕ çинчен, партин XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсем тата коммунизмăн аслă стройкисем çинчен каласа ăнлантараççĕ.

Агитпункта суйлав çинчен калакан плакатсемпе тата суйлава ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме чĕнекен лозунгсемпе илемлетнĕ.

Агитпунктра радио пур. Колхозниксем кунта Мускавран тата Шупашкартан паракан передачăсене ушкăнпа пухăнса итлеççĕ.

Агитпунктра тĕрлĕрен витринăсем тунă. Уйрăммăнах, «В. И. Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем», «Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план» ятлă витринăсене колхозниксем юратса пăхаççĕ.

М. ПЕТРОВ.
В. ВЕСЕЛОВ.

Суйлавçăсен наказĕсем

ЧКАЛОВСКИ. Тури Туçари суйлавçăсем—ваттисем те, çамрăккисем те—уяври пек капăр тумланса, шкул суртне йышлăн пуçтарăнчĕç. Кунта вĕсем ĕçсынни депутачĕсен Чкаловски район Советне депутата суйлама Туçа суйлав округĕ тăрăх тăратнă кандидатпа—КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕпе Петр Тимофеевич Тимофеев юлташпа тĕл пулчĕç. Тĕлпулу пысăк хаваслăхпа иртрĕ. Пулас депутат суйлавçăсене «Социализмран коммунизма куçмалли çулсем çинчен» темăпа доклад туса пачĕ. Доклад хыççăн суйлавçăсем пĕрин хыççăн тепри сăмах илсе туха-туха каларĕç. Вĕсем Ленин — Сталин партийĕ ÿстерсе çитĕнтернĕ, ĕçре писĕхнĕ Тимофеев коммунист, район Совечĕн депутачĕ пулса, халăх шанăçне тÿрре кăларассине шанса тăнине палăртрĕç, çакăнпа пĕрлех хăйсен кандидатне наказсем нумай пачĕç.

— Аслă Отечественнăй вăрçă иртнĕренпе эпир Тимофеев юлташа район Советне виççĕмĕш хут суйлатпăр,—терĕ доверённăй А. Тарасов юлташ.—Вăл суйлавçăсен наказĕсене тимлĕн пурнăçласа пырать, район хуçалăхне малалла вăйлатассишĕн тăрăшать, колхозсен общественлăллă хуçалăхне ÿстерсе пыма ĕçпе те, паха канашсем парса та пулăшать. Вăл пулăшнипе пĕлтĕр пирĕн колхоз çĕнĕ автомашина туянчĕ, ĕçре чылай ÿсĕмсем турĕ. Тимофеев юлташ ялти вăтам шкулта вĕренекенсене коммунизмлă воспитани парас ĕçе лайăхлатма та пайтах вăй хурать. Эпĕ хамăр округри суйлавçăсене пурне те вырăнти Советсене суйламалли кун—февралĕн 22-мĕшĕнче П. Т. Тимофеев юлташшăн сасăлама чĕнетĕп!

— Пирĕн ялта врач пункчĕ уçасси пирки иртнĕ çулсенчех сăмах хускатнăччĕ. Больница çывăхра пулман пирки ялти ĕççыннисене врач пункчĕ питĕ кирлĕ. Çамрăксене хутла вĕрентес ĕçĕн пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк. Анчах пирĕн ялти вăтам шкулта классем валли пÿлĕмсем çитмеççĕ, çавăнпа ачасене икĕ сменăпа вĕрентме тивет. Шкул валли çĕнĕ çурт тутарас пулать. Тата апĕ çакна каласшăн: райсовет исполкомĕн çулйĕр пайĕнче ĕçлекенсем хĕлле ялсене килсе çÿренине курма çук, çулсем япăххипе килмеççĕ. Вĕсем хĕллехи вăхăтра çулсене çÿреме юрăхлă тăвассишĕн сахал тăрăшаççĕ. Эпĕ хамăр кандидата çак ыйтусене район Советĕнче хускатма сĕнесшĕн,—терĕ ватă суйлавçă Семен Захарович Захаров.

Л. Остряков суйлавçă ялта политикăллă-массăллă ĕçе лайăхлатас, колхозниксен культурине ÿстерес енĕпе ытларах ĕçлеме кирлине палăртрĕ, суйлавçăсем хăйсен депутачĕсене ĕçре тăтăшах пулăшса пыма тивĕçли çинчен каларĕ, колхозниксене суйлав кунне ĕçре çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме чĕнчĕ.

— Пирĕн Чкалов ячĕпе тăракан колхозра общественлăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕ çултан-çул ÿссе пырать. Выльăхсене çĕнĕ витесем кирлĕ. Строительство валли йывăç турттарма автомашина прицепĕ çукки пирĕншĕн пысăк чăрмав пулать. Эпĕ хамăрăн кандидатран колхоза прицеп туянас ĕçре пулăшма ыйтатăп,—терĕ Н. Табаков колхозник.

Малалла тухса калакансем колхозпа машина-трактор станцине ертсе пыракансем хушшинче тачă çыхăну çукки çинчен каларĕç. Трактор бригади айăпĕпех халĕ те молотилка йĕркеллĕ ĕçлеймест. Темиçе кун хушши трактор радиаторне шăнтса лартрĕç. Çаксене лайăх пĕлсе тăрать пулин те, трактор бригадин бригадирĕ А. Михайлов партин районти активĕн иртнĕ пухăвĕнче пĕр намăса пĕлмесĕр çапла суять: «Пирĕн молотилка пĕр чăрмавсăр ĕçлет, анчах колхоз правленийĕ авăн çапассине хăй вăраха тăсса пырать», тет. Трактор бригадин ĕçне критиклесе, колхозниксем килес çул колхозра ĕçлеме уйрăм отряд ярса пама ыйтрĕç.

И. ТЕНЮШЕВ.

Кандидатсем суйлавçăсем патĕнче

ÇĔРПУ. Февралĕн 9-мĕшĕнче хулари Горьковски суйлав участокĕнче суйлавçăсен пухăвĕ пулса иртрĕ.

— Паян эпир,—терĕ агитпункт заведующийĕ Н. Марченко юлташ пухăва уçса,—район тата хула Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсемпе тĕл пулса калаçма пухăнтăмăр.—Часах февралĕн 22-мĕшĕ çитĕ. Çак кун пирĕншĕн пысăк уяв. Пирĕн халăх çакăн пек уявсене яланах ĕçри çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илме вĕреннĕ. Пĕтĕм халăхпа пĕрле пирĕн районти ĕççыннисем те февралĕн 22-мĕшне — вырăнти Советсене суйламалли куна хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçланипе кĕтсе илеç.

Унтан вăл район Советне депутата суйлама тăратнă кандидата, «Новая жизнь» колхоз председательне Александр Никодимович Павлов юлташа сăмах парать. Вăл хăйне район Советне депутата суйлама кандидата тăратнăшăн суйлавçăсене чĕререн тав турĕ, малашне татах та лайăхрах ĕçлеме, суйлавçăсем панă пур наказсене те чыслăн пурнăçласа пыма пулчĕ.

А. Павлов хыççăн унăн доверённăйĕ Прокопьев юлташ сăмах илсе каларĕ.

— Павлов юлташ пĕчĕк колхозсенчен пĕрлештерсе тунă пысăк колхоз—«Новая жизнь» колхоз председателĕ пулса ĕçлеме тытăнни нумаях пулмасть-ха,—тет Прокопьев юлташ.—Апла пулин те, вăл колхоз хуçалăхне çирĕплетес тĕлĕшпе сахал мар ĕçлерĕ. Пĕрлешиччен пирĕн колхоз выльăх-чĕрлĕхрен питĕ сахал тупăш илнĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана нихçан та тултарман. 1952 çулта пачах урăхла. Колхозри доярка Мария Силантьева хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен вăтам шутпа 1.532,5 килограмм сĕт суса илчĕ. Колхоз 1952 çулта государство планĕнчен иртерсе выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем панăшăн пĕр автомашина туянчĕ. Çак çулсенче тырпул тухăçлăхĕ те чылай ÿсрĕ. Сăмахран, эпир иртнĕ çулта кашни гектартан вăтам шутпа 40-шер центнер вир туса илтĕмĕр.

Çак кунсенче пирĕн колхоз суйлав умĕнхи ăмăртăва хутшăнса хăйĕн социализмлă обязательствине чыслăн пурнăçларĕ. Вăрман касмалли, турттармалли тата çул хĕррине турттарса тухмалли плана иртерсе тултарчĕ.

— А. Н. Павлов юлташ—Ленин-Сталин партийĕн шанчăклă ывăлĕ, февралĕн 22-мĕшĕнче пурте, пĕр çын пек пулса, «Новая жизнь» колхоз председателĕшĕн сасăлама чĕнетĕп, — тесе вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне доверённăй Прокопьев юлташ.

Ун хыççăн район тата хула Советне депутата суйлама тăратнă кандидат И. Сергеев, хула Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем В. Петров, Н. Будаева, Е. Беспалова, В. Гусева юлташсем тата вĕсен доверённăйĕсем тухса каларĕç.

Пухура пулнă суйлавçăсем Ленин-Сталин партине, Совет правительствине, аслă Сталина вĕçĕ-хĕррисĕр юратнине кăтартса пачĕç.

Юлашкинчен пуху Сталин юлташ патне çыру яма йышăнчĕ.

В. АЛЕКСЕЕВ.

Хисеплĕ комбайнерка

ЭЛĔК. Мăн Вылă суйлав округĕ тăрăх ĕççынни депутачĕсен район Советне депутата суйлама Мария Васильевна Михайлова юлташа кандидата регистрациленĕ.

Мария Васильевна Михайлова юлташ Элĕк МТС-ĕнче ĕçлет. Вăл Хирлеппуç ял Советĕнчи Торăпкасси ялĕнче, 1919 çулта, вăтам хресчен çемьинче çуралнă. Мария Васильевна 1949 çултан пуçласа 1950 çула çитиччен Канашри механизаци шкулĕнче вĕреннĕ.

Комбайнерка М. Михайлова юлташ кăçал «Коммунар» комбайнпа 323 гектар тырă вырнă, сезонти плана иртерсе тултарнă. Ĕçе вăл яланах чĕререн тăрăшса, тирпейлĕ тăвать.

Мария Васильевна Михайлова юлташа суйлавçăсем халăхшăн яланах тăрăшса ĕçленĕшĕн хисеплеççĕ.

Мăн Вылăри суйлав округĕнчи суйлавçăсем Мария Васильевна Михайлова кандидатуришĕн сасăлĕç.

А. ОРЛОВ.

ЯЛТИ ФЕЛЬДШЕРИЦА

ВĂРНАР. Валентина Тихоновна Ерлыгина фельдшерицăна Ершепуç çыннисем ăшă кăмăлпа хисеплеççĕ. Унăн ĕçне ырлаççĕ. Ерлыгина юлташ 1920 çулта Харьков хулинче çуралнă. Вăл çамрăкранпах медицина ĕçне юратнă, Харьковри фельдшерски шкултан вĕренсе тухнă. Нимĕç захватчикĕсем пирĕн Тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăнсан, Ерлыгина юлташ Аслă Отечественнăй вăрçа кайнă, фронтра аманнă салтаксене сыватас тĕлĕшпе госпитальре ĕçленĕ. Хăйĕн ĕçне пысăк хастарлăхпа туса пынă. Медицина службин кĕçĕн лейтенанчĕ ятне илнĕ.

Вăрçă чарăннă хыççăн Валентина Тихоновна Вăрнар районĕнчи Ершепуçне килнĕ. Унтанпа вăл Ершепуçĕнчи фельдшер пункчĕн заведующийĕ пулса ĕçлет. Ĕççыннисен сывлăхĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшать, чирлĕ çынсем патне килсе те çÿрет.

Ершепуç ялĕнчи хресченсем хăйсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче В. Т. Ерлыгина юлташа район Советне депутата суйлама, çавăн пекех ăна ял Советне депутата суйлама та кандидата тăратрĕç.

Ершепуç суйлав округĕнчи суйлавçăсем суйлав кунĕнче пурте, пĕр çын пек пулса, В. Т. Ерлыгина юлташшăн сасăлĕç.

П. НИКОЛАЕВ.

Районти хаçатсене пăхса тухни

ПУРНĂÇРАН ЮЛМАЛЛА МАР

Çултан-çул ÿссе пырать Çĕмĕрле хули. Кунта хальĕ союзлă министерствăсене пăхăнса тăракан икĕ пысăк предприяти ĕçлет. Механизациленĕ вăрманпромхоз, промкомбинат, апат-çимĕç комбиначĕ, кирпĕч завочĕ тата ытти предприятисем çĕршыв валли тĕрлĕ продукци туса кăлараççĕ. Хулари ĕççыннисем вăй-хăвата шеллемесĕр пысăк çитĕнÿсемшĕн тăрăшаççĕ, производствăра çĕнĕрен-çĕнĕ ÿсĕмсем тăвассишĕн кĕрешеççĕ.

Хулари 10 предприяти çулталăк планне срокчен тултарса, планран иртерсе çĕршер пин тенкĕлĕх продукци панă. Иртнĕ çулта нумай рабочисем çулталăк хушшинче икĕ çул нормине тултарчĕç. Вĕсен кулленхи пурнăçĕпе ĕçне, шухăшкăмăлне, ĕмĕтне районти «Социализмлă ĕç» хаçат мĕнле çутатса пырать-ха?

Хулари предприятисен ĕçне вăл начар çутатать. Хăшпĕр номерĕсене пăхсан, çак хаçата промышленность вăйлă аталаннă хулара тухса тăракан хаçат теме май çук. Чăн та, вăл вăхăтран вăхăта предприятисем çĕнĕ обязательствăсем илни çинчен е çав обязательствăсене пурнăçлани çинчен кĕске информацисем пичетлет. Анчах обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе мĕнле кĕрешни çинчен, малта пыракансен опычĕ çинчен хаçатра пĕр сăмах та çук. Хаçат хăй тĕллĕн пĕр çивĕч ыйту та хускатмасть.

1952 çул пуçламăшĕнче сĕтел-пукан комбинатĕнчи рабочисем патне сменăри нормăна 6—7 сехетре тултарса, юлнă вăхăтра планран иртерсе продукци туса кăларассишĕн социализмлă ăмărту пуçарса яракансенчен пĕри—Канашри вагонсем юсакан заводри тимĕрçĕ Семенов юлташ килсе, хăйĕн ĕç опычĕ çинчен, хăйсем пуçарнă ăмăртăвăн пĕлтерĕшĕ çинчен каласа пачĕ. Семенов юлташпа тĕл пулма пухăннă пÿхура сĕтел-пукан комбинатĕнчи рабочисем кăна мар, «Большевик», «Комбайндеталь» заводри рабочисен представителĕсем те пулчĕç. Хаçат ку тĕлпулу çинчен нимĕн те çырмарĕ. Хаçат Канашри вагонсем юсакан заводри стахановецсен пуçарăвĕ çинчен икĕ стахановец çырăвне пичетлерĕ те — çакăнпа ĕç пĕтрĕ. Хулари предприятисенче çĕнĕ пуçару мĕнле сарăлни çинчен урăх сăмах-юмах пулмарĕ.

Хаçат хăй пуçарнă ĕçе те вĕçне çитермест. 1952 çулхи апрелĕн 24-мĕшĕнче «Стахановец трибуни» уçрĕ. Малтанхи статьяра сĕтел-пукан комбинатĕнчи столяр-стахановец Г. Генеральшин хăйĕн ĕç опычĕпе паллаштарчĕ. Вăл 1951 çулта 3,4 çулталăк норми тултарнă. Г. Генеральшин юлташ хăйĕн статьинче мĕнле майпа çакăн пек пысăк тухăçлă ĕçлени çинчен вулакансене ăнланмалла каласа пачĕ. Г. Генеральшин юлташ пек харпăр хăй ĕçне юратса, тăрăшса тăвакан рабочисем сĕтел-пукан комбинатĕнче кăна мар, «Большевик» тата «Комбайндеталь» заводсенче те сахал мар. Вулакансем Г. Генеральшин юлташ хыççăн çав стахановецсен шухăшкăмăлĕпе паллаштарасса кĕтрĕç.

Хаçат районти предприятисен ĕçĕпе вулаканĕсене кулленех паллаштармасть. Икĕ çул хушши сĕтел-пукан тăвакан комбинат коллективĕ Мускаври Ломоносов ячĕпе тăракан государство университечĕ валли пысăк пахалăхлă сĕтелсемпе шкафсем турĕ. Мĕн пек пысăк чыс вăл Çĕмĕрлешĕн! 1952 çул хушшинче хаçат çак пысăк чыс курекен событи çинчен икĕ информацире пĕрер предложенипе кăна асăнчĕ.

Çĕмĕрлери предприятисем кăларакан продукци çĕршывĕпех саланать. Комбинат кăларакан сĕтел-пуканпа тата шкафсемпе Кузбасс шахтерĕсем, Вăтам Азири çĕрмамăк ÿстерекенсем, Магнитогорск металлургĕсем усă кураççĕ. Çĕмĕрлери сĕтел-пукана туянакан çынсем ĕçчен столярсене тав туса час-часах çырусем яраççĕ. Кирпĕч завочĕ кăларакан черепица Çĕнĕ Каховкăри суртсене витме каять, «Красный Октябрь» артель кăларакан кĕпе тÿмисем Урал таранах саланаççĕ. Ăçта кăна çитмест пулĕ вăрманпромхоз склачĕсенчи куллен çĕршыв тăрăх саланакан йывăç? Çакăн çинчен вулакансем пĕлмеççĕ.

1952 çулхи майăн 31-мĕшĕнче йышăннă Указ тăрăх вăрман ĕçĕнче чылай вăхăт хушши тата йĕркеллĕ ĕçленĕшĕн СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Çĕмĕрле вăрманпромхозĕнчи 5 рабочие Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, 16 çынна «Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе, 35 çынна «Ĕçре палăрнăшăн» медальне наградăларĕ. Вăрманпромхоз коллективĕшĕн мĕн пек пысăк савăнăç! Мĕн чухлĕ ĕмĕт-шухăш çуралчĕ пулĕ пысăк наград илме тивĕçлĕ пулнисен? Тата тăрăшарах ĕçлес, хăйсен ĕçне хакланăшăн партипе правительствăна тав тăвас кăмăлĕ вĕсен, паллах, пысăк пулчĕ. Анчах çав ырă кăмăла уçмалăх хаçатра вĕсем валли вырăн тупăнмарĕ.

КПСС райкомĕ пĕр вăхăтра уйăхран уйăха редакци планне бюро ларăвĕнче çирĕплететчĕ. Юлашки вăхăтра хаçат ĕçĕпе райком интересленме пăрахрĕ. Уйрăмах пысăк пулăшу кирлĕ вăхăтра хаçат редакцийĕ пачах пулăшусăр тăрса юлчĕ. Юлашки уйăхсенче тухнă номерсенче хаçат страницисенче промышленность çинчен çырнă материала кăна мар, ялхуçалăхĕ е вăрман çинчен çырнă пĕчĕк заметкăсене те сайра тĕл пулатăн. Редакцинче ĕçлекенсем (редакторшăн О. Давыдова алă пусать) хаçат кăлармалли чи çăмăл май тупнă—вĕсем хаçат страницисене ямăт япалапа — ТАСС материалĕсемпе е республикăра тухса тăракан хаçат материалĕсемпе тултараççĕ, тепĕр чухне информацисене сĕтел-пукан комбинатĕнче тухса тăракан «Знамя стахановца» хаçатран илеççĕ.

Авторсемпе ĕçлемен пирки хаçат корреспондентсене те сухатса пĕтерчĕ. Промышленноçра малта пыракансен статьисем хаçатра пачах çук.

Хаçат районти политикăпа хуçалăх тата культура ĕçĕнче ĕççыннисене вĕрентсе пыма пултартăр тесен, унăн сăнсăпатне тĕпрен улăштармалла. Çавăн чухне тин вăл хăй умĕнчи задачăна пурнăçлама пултарать. Кăна тума вара КПСС райкомĕн хаçата практикăллă пулăшу памалла, хăйĕн хаçачĕпе куллен интересленсе, ун ĕçне тивĕçлипе ертсе пымалла.

ПРОПАГАНДИСТСЕМПЕ КОНСУЛЬТАНТСЕН СЕМИНАРĔ

КПСС Тăвай райкомĕ штатра тăман консультантсен семинарне иртерчĕ. Семинарта пулнисем «И. В. Сталин юлташ экономикăллă аталанăвăн законĕсен объективлă характерĕ çинчен», «И. В. Сталин юлташ социализмăн экономикăллă тĕп законĕ çинчен», «И. В. Сталин юлташ хальхи капитализмăн экономикăллă тĕп законĕ çинчен» темăсем тăрăх лекцисем итлерĕç. Лекцисене КПСС райкомĕн секретарĕсем вуларĕç. Семинарта пурĕ 17 консультант пулчĕ.

Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхри стахановецсем

Ăста арматурщик

Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн строительствинче Алексей Данилович Смирнов виçĕ çул ытла ĕçлет. Унтанпа вăл сменăри нормăна тултарман пĕр кун та пулман, ĕçе ялан тĕплĕн, паха туса пырать. Кăçалхи январь программине Смирнов бригади иртерсе тултарчĕ, февраль уйăхĕнче те кунсерен паха тĕслĕхсем кăтартать. Иртнĕ çул варринче Мускавран, СССР Çăмăл промышленность министрĕ А. Н. Косыгин юлташран телеграмма килнĕ. Çак телеграмма Алексей Данилович ертсе пыракан арматурщиксен бригадине паха ĕçлекен бригада ятне панине пĕлтернĕ. Çапла ĕнтĕ, Шупашкарти арматурщик-бригадир Пĕтĕм Союзри строительсемшĕн те паллă та хисеплĕ çын пулса тăчĕ.

Пысăк строительствăра арматурăсăр пĕр утăм та ярса пусма çук. Бетон стена тунă чухне, чи малтан тăчка çаврака пралуксенчен ăнса хатĕрленĕ тыткăчсене е корпина пек çыхнă хатĕрсене вырнаçтарса лартаççĕ, унтан çак арматура çине шĕвĕ бетон ярса хытараççĕ. Акă мĕнле пулать вăл тимĕрпе бетонран тăракан тĕреклĕ те çирĕп стена.

Арматура тумалли çаврака тимĕр вăл кăранташ тачкăшĕнчен пуçласа кĕреçе авăрĕ тачкăш пулать. Çав çаврака тимĕре кирлĕ [illegible] касма е касса татма машинăсем пур. Акă, эпир Алексей Данилович Смирнов кĕреçе авăрĕ тачкăш тимĕре [illegible] машинăна кĕртсе ярса кнопка çине пÿрнипе пуснине куратпăр. Электричество вăйĕпе ĕçлекен машина кĕрлеме тытăнчĕ. Çаврака тимĕрĕн пĕр вĕçĕ [illegible]. Ку [illegible] арматура, вăл пир тĕртекен фабрика корпусне тунă çĕре каять. Алексей Данилович хатĕр арматурăна тĕрĕслесе [illegible]

промышленность участокĕ валли туса хатĕрленĕ. Анчах участокран арматура илме килмеççĕ. Алексей Данилович стройкăри йĕркесĕрлĕхе тÿссе тăраймасть. Çавăн пек унăн характерĕ—ăçта мĕнле çитменлĕх курать, ун çинчен çийĕнчех айăплă çынна кусĕнчен калать. Халĕ те акă вăл Мигушин прораба шыраса тупса хăйнех каласшăн пулчĕ.

Юр хĕвсе кайнă çул тăрăх Смирнов сулахайри пысăк корпус патнелле утать. Хирĕç çил-тăман вĕçтерет. Урса кайнă çанталăкĕ паян иртеннех алхасать, кашни хуралтă тĕлне кĕрт хывать. Тĕл-тĕл пилĕк таран юр ăшне кĕрсе ÿкет, анчах чарăнса тăмасть, прораб патне васкать.

Виçĕ çул хушшинче строительствăра йывăрлăхсем нумай тĕл пулнă, Смирнов вара нихçан та пуçа усса тăман, хăй тапратнă ĕçĕн вĕçне тухмасăр çырлахман.

Пĕр арматура цехĕнчи çитĕнÿсемшĕн кăна тăрăшмасть вăл, пĕтĕм строительствăри ĕçсене кунăçтарса пырассишĕн тăрăшать.

Çавăн пек ĕнтĕ вăл Алексей Данилович Смирнов. Унăн кăмăлĕ кирек хăçан та пархатарлă пуçару тапратса яма хатĕр.

Участок кантурне çитсен, Смирнов сĕтел хушшинче ларакан прораба кусĕнчен пăхса илчĕ те сывлăх сунчĕ:

— Мĕнле пурăнатăр? Эпĕ сирĕнпе ятлаçма килтĕм. Хатĕр арматурăна мĕншĕн халĕ те илсе каймастăр?—терĕ.

Мигушин прораб Смирнова лайăх пĕлет: çак çил-тăманла кун вăл ĕçсĕр çÿремест ĕнтĕ. Арматурине, чăнах та, тахçанах турттарса килмеллеччĕ, [illegible] айăпăн, анчах бригадир умĕнче хăйне вăл, нимĕн пулман пекех тытма тăрăшать.

* * *

Çирĕм виçĕ çул каялла çамрăк Смирнов Шăл çывăхĕнчи чăваш ялĕнчен пĕрремĕш пилĕкçуллăхри пĕр пысăк комбината тума Челябинск облаçĕнчи Магнитнăй ту çине кайнă. Унччен вăл заводра пулса курман, арматура мĕн иккенне пĕлмен. Ăста вырăс рабочийĕсем аякран килнĕ чăваш ачине çĕнĕ профессие вĕрентнĕ. Смирнов чи малтан пĕрремĕш домна тунă çĕрте ĕçленĕ. Ун чухне хальхи чаплă Магнитогорск хули вырăнĕнче пĕтĕмпе те икĕ чул сурт çеç пулнă.

Смирнов кăнтăрла арматурщиксен бригадинче ĕçленĕ, каçхине техникăна вĕренмелли курса çÿренĕ. Ялти пуçламăш шкултан çеç вĕренсе тухнăскер, ăна курсра вĕренме çăмăл пулман. Анчах вăл нимĕнле йывăрлăха та парăнман.—Кам мĕн шырать, çавна тупать,—теççĕ. Пурăнакиле Смирнов ытларах цĕлекен, тухăçлăрах ĕçлекен пулнă.

Пĕрлештерсе пысăклатнă цехра çамрăк арматурщик Смирнов хăйĕн юлташĕсемпе ăмăртса ĕçлесе, çитĕнÿ хыççăн çитĕнÿ туса пынă. Унăн тавçăрулăхĕ ватă рабочисен кăмăлне кайнă. Инçетри чăваш ялĕнчен килнĕ çамрăк квалификациллĕ арматурщик пулса тăнă.

Çирĕм виçĕ çул хушшинче Смирнов миçе пин тонна çаврака тимĕр пралук авса çыхман-ши? Вăл туса хатĕрленĕ арматура тимĕрне пĕр вĕçĕмрен хурса тухас пулсан, Магнитогорскран Шупашкара çитсе иртсех кайнă пулĕччĕ.

Шупашкарти пир-авăр комбиначĕн строительствине килсен Смирновпа арăмĕ—Наталия Сергеевна арматура цехне кĕнĕ. Тĕрĕссине каласан, вĕсем çак цехри пирвайхи рабочисем пулнă.

Магнитогорскри опыт Смирнова кунта кашни утăмрах пулăшса пынă. Сăмахран, малтанласа кашни участок валли арматурăна уйрăм вырăнта хатĕрлеме тытăнасшăн пулнă, пурлă-çуклă механизмсене темиçе çĕре сапаласа пĕтерме сĕннĕ. Смирнов çакна хирĕç пулнă, Магнитострой Шупашкарти комбинатран темиçе хут пысăк стройка пулсан та, арматурщиксен ĕçне пĕрлештернине аса илтернĕ вăл. Унăн шухăшĕпе главнăй инженерпа механиксем килĕшнĕ.

Арматура цехĕнчи йывăр ĕçе—тулти тимĕре малтанласа шала алă вĕççĕн йăтса кĕртнĕ. Кун пек йывăр ĕçсене механизацилемесен, пысăк стройкăри арматурщиксенчен тухăçлă ĕç кĕтме çук вара, мĕншĕн тесен рабочисем тимĕр сĕтĕрсе ывăнаççĕ те, тухăçлă ĕçлейми пулаççĕ. Алексей Данилович çак ĕçе механизацилеме тытăннă.

Цеха тултан тимĕр туртса кĕртекен малтанхи машина-самотаска урамра юр айĕнче выртнă. Ăна цеха кĕртсе вырнаçтарса лартма хăшпĕр детальсем çитмен, анчах Смирнов механиксене канăç паман.

Тÿрех калас пулать, строительствăра пĕр пысăк çитменлĕх пур—унăн руководителĕсем механизмсемпе çителĕклĕ усă курма пĕлменни. Машинăсемпе тумалли хăшпĕр ĕçе алăпа тутарттараççĕ. Ку, пĕр енчен, ĕç тухăçлăхне ÿстерме чăрмантарать, тепĕр енчен — строительствăна хаклатать. Пĕлтĕр арматура цехĕ валли Мускавран икĕ барабанлă çĕнĕ самотаска илсе килнĕ. Çак машинăва цеха кĕртсе вырнаçтарса çеç лартмалла, вара арматурщиксен ĕç тухăçлăхĕ 40 процента çити ÿсет. Смирнов кунсеренех çĕнĕ машина патне пырса пăхать, ăна тĕрĕслет. Апла пулин те вăл хăй тĕллĕн ăна цеха кĕртсе лартма пултараймасть. Ку ĕçе машинăсене проката паракан базăн тумалла, анчах унăн начальникĕ Маркин юлташ пĕртте васкамасть.—Епле-ха ятлаçас мар,—тет кун пирки калаçма тытăнсан Смирнов. Тем пек ырă машина ĕççĕр тăрать, эпир алă вĕççĕн тимĕр йăтатпăр.

Çак ыйтупа вăл главнăй механик патĕнче те пулнă, машинăсене проката паракан базăна та çитнĕ, юсав мастерскойне те пĕлтернĕ. Смирнов шухăшĕпе пурте килĕшсе çĕнĕ ĕçе тапратса яраççĕ. Тăрăшни сая каймарĕ: январь уйăхĕн вĕçĕнче çĕнĕ самотаска хута кайрĕ!

* * *

... Промучасток кантурĕнчен Алексей Данилович Смирнов арматура цехне çуран мар—лашапа таврăнать. Мигушин прораб хатĕр арматурăна турттарма лав уйăрса панă иккен.—Пирĕн бригадир ыйтнине хирĕç прораб мар, управляющи те турткаланса тăраймĕ,—теççĕ савăннă арматурщиксем.

Алексей Данилович лавçăна хатĕр арматурăсен купи çине тăсса кăтартрĕ те суна çинчен сиксе анчĕ.

— Пулăшас пулать,—терĕ вăл хăйĕн бригадинчи рабочисене лав çине кăтартса.

Рабочисем кĕпĕрленсе лав патне чупса пычĕç, арматура çыххисене суна çине тиеме тытăнчĕç.

Пĕр профессире çирĕм виçĕ çул хушши ĕçлекен Смирнов арматурщик кирек ăçта та çамрăксене хăйĕн опычĕпе, ăсталăхĕпе паллаштарма тăрăшать. Ку тĕлĕшпе ăна Шупашкарта уйрăмах нумай ĕçлеме тĕл килнĕ. Вăл ĕçе кĕнĕ вăхăтра арматура цехĕн ячĕ кăна пулнă, ăста рабочисем пĕрре те пулман. Çавăнпа та администраци Алексей Даниловича тÿрех арматурщиксен бригадине организацилеме хушнă. Ĕçе кĕме пыракансем хушшинче слесарьсемпе шоферсем, столярсемпе бетонщиксем, тимĕрçĕсемпе плотниксем, штукатурсемпе малярсем тата темиçе тĕрлĕ профессиллĕ çынсем те пулнă, анчах арматурщиксене ун чухне Смирнов тĕл пулман. Мĕн тăвас тетĕн-ха, ялтан килекен çамрăксенченех çĕнĕ арматурщиксен бригадине организацилемелле пулнă. Ситменнине Смирнов бригадине кĕме кăмăл тăвакансем те сахал пулнă. Çĕр чавнă çĕре, грузчике е йывăç касkalанă çĕре кĕрес текенсем кунсеренех килсе тăнă, арматура туса хатĕрлемелли ĕçе вĕренесси çинчен сăмах тапратсан, нумайăшĕ Смирнов умĕнчен пăрănса кайнă: «унта пиртен пиçмест», тесе хунă.

Ырă кăмăллă Смирнов хăйĕн пурнăçĕ çинчен каласа кăтартнă, ăçта-ăçта пулни тата мĕн чухлĕ ĕçлесе илни çинчен те хыпарланă. Ĕçе кĕме килнĕ çамрăксем пĕр-пĕрин çине пăхкаласа илнĕ, пĕрисем Смирнов сăмахĕсене ырланă, теприсем çав-çавах иккĕленсе тăнă. «Темĕн çав, халиччен эпир тимĕр-тăмăр тыткаласа курман та, ун пек ĕçре пултарас çук пуль», тесе бригадир кусĕнчен пăхнă пĕри.

— Манăн арăм пултарнине эсир пултараймăр-и?

— Санăн арăму та арматурщик-и?

— Хам та, арăм та арматурщик, часах акă ачасене те арматурщик тăватăп. Маншăн пулсан, тĕнчере арматурщикран лайăх професси çук,—тенĕ Смирнов.

— Апла пулсан, эсĕ кăтарт-ха, мĕн вăл арматура?—тенĕ çамрăксем.

Алексей Данилович хăйне ĕçлеме кăмăл тунă çынсене тин çеç туса лартнă сарая илсе каять. Унта тимĕре авмалли тата ăна касмалли машина ларнă. Смирнов урайĕнче тăсăлса выртакан çаврака тимĕре илет те машина çине хĕстерсе лартать, унтан рубильник çине пусать. Кĕреçе авăрĕ тачкăш тĕреклĕ тимĕре хăватлă машина чустаран тунă кĕлентĕр пек авкаласа пĕтерет.

— Ку балкон тунă çĕре каять,—тет Смирнов, унтан вăл хатĕр арматура купи çине кăтартать,—кусем çип арлакан фабрика тунă çĕре каяççĕ.

Çакнашкал калаçу хыççăн виçĕ çул иртрĕ ĕнтĕ. Виçĕ çул хушшинче Смирнов вĕрентсе хатĕрленĕ каçрсем халĕ пурте ăста арматурщиксем пулса тăчĕç, вĕсем кашниех хăйсен харсăр бригадирне тивĕç стахановецсем, час-часах икĕ çын нормине тултарса пыраççĕ.

А. ТАЛВИР.

Л. З. Мехлис тупăкĕ умĕнче

Коммунистсен партийĕпе Совет государствин паллă деятелĕ, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн членĕ Лев Захарович Мехлис вилчĕ.

...Союзсен çуртĕн Колоннăй залĕ. Кунта чечексемпе пальмăсем хушшинчи çÿлĕ постамент çинче тупăк вырнаçтарса лартнă. Пуçĕ тĕлĕнче хура хăюпа тытнă хĕрлĕ ялав. Чечек çыххисем нумай. Вĕсенчен пĕрин çинче: «КПСС Центральнăй Комитечĕпе СССР Министрсен Советĕнчен Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн членне Лев Захарович Мехлис юлташа», тесе çырса хунă. Унпа юнашар—СССР Верховнăй Совет Президиумĕнчен, КПСС Мускав Комитечĕпе Мускав хула Комитечĕсен, ĕççыннин депутачĕсен Мускав хула Советĕнчен, ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕнчен, Совет Çарĕн Политикăллă Тĕп Управленийĕнчен, СССР Государство контроль министерствин коллегийĕнчен унăн работникĕсен коллективĕнчен хунă чечек кăшăлĕсем.

Кăнтăрла иртни икĕ сехет. Колоннăй зала ĕççыннисем кĕртме пуçласçĕ. Хисеплĕ хурала КПСС Центральнăй Комитечĕн членĕсем, Правительство членĕсем, Правительство Комиссийĕн членĕсем, Совет Çарĕпе Флочĕн маршалĕсем, генералĕсем тата адмиралĕсем, столицăри парти, совет, профсоюз, комсомол работникĕсем, совет культурин деятелĕсем тăраççĕ. Хисеплĕ хурал кашни пилĕк минутран улшăнать.

Залра хурлăхлă музыка кĕвви илтĕнет. Оркестрсем Чайковский, Бетховен, Шопен произведенийĕсене выляççĕ.

Коммунистсен партийĕн шанчăклă ывăлĕпе, хăйĕн пĕтĕм пурнăçне совет халăхне ĕçне панă Лев Захарович Мехлиспа сывпуллашма Союзсен çуртне Мускаври ĕççыннисем пиншерĕн пынă. Тупăк умĕнчен министерствăсемпе тĕрлĕ учрежденисенче ĕçлекенсем, столицăри заводсенче, фабрикăсенче, стройкăсенче ĕçлекен рабочисем, инженерсем, служащисем, Совет Çарĕн воинĕсем, студентсем, шкулта вĕренекенсем, совет ничечĕнче ĕçлекенсем иртеççĕ.

1930 çулта, Хĕрлĕ профессура институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, Лев Захаровича «Правда» хаçат редакцине ĕçлеме янă. Унта ĕçлесе, вăл партин тĕп çул-йĕрĕшĕн, партипе совет халăхĕн тăшманĕсене хирĕç активлă кĕрешнĕ. 1937—1940 çулсенче Мехлис юлташ Хĕрлĕ Çарĕн Политикăллă Тĕп Управленийĕн руководителĕ пулнă. Вăл Хасан кÿлли патĕнче тата Халхин-Гол районĕнче Японии захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкас ĕçе хутшăннă. Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче вăл армисемпе фронтсен Çар Советĕсен членĕ пулса ĕçленĕ. СССР Государство контроль министерствин пуçĕнче тăрса, Лев Захарович государство дисциплинине тĕреклетессишĕн, совет законлăхне пăснисене хирĕç пĕтĕм вăй хурса кĕрешнĕ.

Коммунистсен партийĕпе Совет государствин паллă деятелĕсемпе сывпуллашма посольствăсемпе миссисен представителĕсем пынă. Тупăк патне Китай Халăх Республикин ССР Союзĕнчи Посольствинчен, Болгарири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕнчен, Монголи Халăх Республикин ССР Союзĕнчи Посольствинчен, Польшăри рабочисен пĕрлешÿллĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕнчен, Венгрири ĕççыннисен партийĕн Центральнăй Комитечĕсенчен, Демократиллĕ Корея Халăх Республики Посольствинчен, Чехословакири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕнчен, Вьетнамри ĕçлĕх партийĕн Центральнăй Комитечĕнчен, Румыни Халăх Республики Посольствинчен, Албанири ĕçлев партийĕн Центральнăй Комитечĕнчен, Демократиллĕ Германи Республикин дипломати миссийĕнчен чечек кăшăлĕсем хунă.

Союзсен çуртĕн Колоннăй залне ĕççыннисен делегацийĕсем пырса тăраççĕ. Тупăк умĕнчен Мускав металлургĕсем, машиностроительсем, текстильщиксемпе чугун çул работникĕсем, автомобиль тăвакансем, совет интеллигенцийĕ иртеççĕ. СССР Çар министерствинчен, ВЦСПС-ран, РСФСР Государство контроль министерствинчен, СССР Тинĕс-Çар министерствин личнăй составĕнчен, РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕнчен, Сух-йĕр министерствинчен, Хура металлурги министерствинчен, РСФСР Министрĕсен Советĕнчен, Мускав çар округĕн Çар Советĕнчен тата ыттисенчен те чечек кăшăлĕсем хураççĕ.

Л. З. Мехлис юлташ Ленин—Сталин партийĕн шанчăклă ывăлĕ пулнă, вăл пĕтĕм чĕререн социализмлă Тăван çĕршыва парăнса ĕçленĕ. Унăн халăхпа çĕршыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçĕсене Совет Правительстви пысăка хурса хак панă. Лев Захаровича тăватă хутчен Ленин орденĕпе, икĕ хутчен Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе, 1-мĕш степень Кутузов орденĕпе, 1-мĕш степень Суворов орденĕпе тата нумай медальсемпе наградăланă. Пирĕн халăх Коммунистсен партийĕпе Совет государствин паллă деятелĕсенчен пĕри пулнă Л. З. Мехлисăн çутă ятне асра тытса пурăнĕ.

Кăçхине 10 сехет. Союзсен çуртне çыннисене кĕртме чараççĕ. Колоннăй залра Л. З. Мехлис тупăкĕ умĕнче унăн тăванĕсемпе çывăх тусĕсем, Правительство Комиссийĕн членĕсем, министрсем, столицăри партипе совет организацийĕсен руководителĕсем юлаççĕ. Вĕсем юлашки хут сывпуллашаççĕ...

Кăçхине Л. З. Мехлис ÿтне кремаци тунă. (ТАСС).

Л. З. Мехлиса пытарни

Февралĕн 15-мĕшĕнче Мускаври ĕççыннисем Коммунистсен партийĕпе Совет государствин паллă деятелĕ, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн членне Лев Захарович Мехлиса юлашки çула ăсатнă.

Кăнтăрла 12 сехетре ĕççыннисене Союзсен çуртĕн Колоннăй залне кĕртме пуçласçĕ. Çÿлĕ постамент çинче, чечексем хушшинче, виле çунĕн кĕлне хунă урнă тăрать. Малта—Л. З. Мехлисăн пысăк портречĕ, пĕчĕк пурçăн минтерсем çинче—тăватă Ленин орденĕ, икĕ Хĕрлĕ Ялав орденĕ, 1-мĕш степень Суворов орденĕ, 1-мĕш степень Кутузов орденĕ, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ тата медальсем.

Коммунистсен партийĕн шанчăклă ывăлĕпе, хăйĕн пĕтĕм пурнăçне совет халăхĕшĕн панă Лев Захарович Мехлиспа сывпуллашма Мускав çыннисем пиншерĕн пухăннă.

Хурлăхлă кĕвĕсем вĕçĕмсĕр шăранаççĕ. Кашни пилĕк минута хисеплĕ хурал улшăнса тăрать. Траурлă вахтăра КПСС Центральнăй Комитечĕн членĕсем, Правительство членĕсем, Правительство комиссийĕн членĕсем, маршалсем, генералсем, адмиралсем, Совет Союзĕн Геройĕсемпе Социализмлă Ĕç Геройĕсем, Сталинла премиÿ лауреачĕсем, парти, совет, профсоюз, комсомол работникĕсем тăраççĕ.

Лев Захарович Мехлис урни умĕнчен столицăри предприятисен, учрежденисен, общество организацийĕсен делегацийĕсем вăраххăн иртеççĕ. Вĕсем çĕнĕрен çĕнĕ чечек кăшăлĕсем илсе кĕреççĕ. «Правда» хаçат редколлегийĕпе хаçат коллективĕн сотрудникĕсенчен пысăк чечек кăшăлĕ хунă. Вăл кунта чылай çулсем хушши ĕçлесе Ленин—Сталин партийĕн ĕçĕшĕн активлă кĕрешнĕ. Залра СССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Государство штат комиссийĕнчен хунă чечек кăшăлĕ,—кунта вăл председатель пулса ĕçленĕ. Çавăн пекех ĕççыннин депутачĕсен Мускав область исполкомĕнчен, В. И. Ленин ячĕпе тăракан Политика Академийĕнчен тата ытти организацисенчен хунă чечек кăшăлĕсем.

Л. З. Мехлис кĕлне хунă урна умĕнчен виçĕ сехет хушши рабочисемпе служащисем, совет интеллигенцийĕ, вĕренекенсем, Совет Çарĕн воинĕсем иртеççĕ. Л. З. Мехлис хăйĕн пĕтĕм вăйне коммунизм тăвас ĕçе панă.

Сывпуллашмалли юлашки минутсем çитеççĕ. Хисеплĕ хуралта Н. А. Булганин, Л. М. Каганович, Н. С. Хрущев, М. З. Сабуров, М. Г. Первухин, Н. М. Шверник, М. А. Суслов, М. Ф. Шкирятов, Н. А. Михайлов, В. А. Малышев, А. Б. Аристов, В. В. Кузнецов, Н. М. Пегов, И. Ф. Тевосян, А. М. Василевский, С. М. Буденный, Н. Г. Кузнецов, А. Ф. Горкин тата ыттисем те.

Л. З. Мехлис çунĕн кĕлне хунă урнăна постамент çинчен илсе, залран илсе тухаççĕ. Тăванĕсемпе çывăх тусĕсем, КПСС Центральнăй Комитечĕн членĕсем Совет Правительстви членĕсем, Совет Çарĕпе Флочĕн генералĕсемпе адмиралĕсем, партипе совет работникĕсем хурлăхлă шăплăхра урнана ăсатаççĕ...

Охотнăй рядра Манеж площачĕ тăрăх хисеплĕ çар эскорчĕ тăрса тухнă. Траурлă марш кĕввипе пытармалли процесси Хĕрлĕ площадь патне каять. Кунта çар чаçĕсем вырнаçса тăнă. Коммунистсен партийĕн шанчăклă ывăлне, генерал-полковника Л. З. Мехлиса юлашки хут чыс тума Мускав çыннисем нумайăн пухăннă.

Л. З. Мехлис урнине Ленин мавзолейĕ умне вырнаçтарса лартаççĕ. Мавзолей трибуни çине КПСС Центральнăй Комитечĕн членĕсем тата СССР Правительствин членĕсем хăпараççĕ.

Траурлă митинг пуçланать. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе СССР Министрĕсен Советĕнчен А. Ф. Горкин юлташа сăмах параççĕ.

А. Ф. Горкин юлташ сăмахĕ

Юлташсем!

Паян совет халăхĕ Коммунистсен партийĕпе Совет государствин паллă деятелĕпе, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн членĕпе Лев Захарович Мехлис юлташпа сывпуллашать.

Лев Захарович Мехлисăн пурнăç çулĕ вăл халăха, социализмлă Тăван çĕршыва чĕререн парăнса ĕçлени лайăх тĕслĕхĕ пулса тăрать. Вăл Ленин—Сталин партийĕн аслă идейисене пурнăçа кĕртессишĕн, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн паттăррăн кĕрешнĕ борец пулнă.

Мехлис юлташ çамрăклах ĕçе пуçăнма тытăннă. Пĕрремĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче вăл çар службинче пулнă.

1918 çулхи март уйăхĕнче, Октябрь революцийĕ хыççăн часах, Мехлис юлташ Коммунистсен партине кĕрет, унтанпа вăл партипе правительство панă задание тĕрĕс Совет Çарĕнче, государство органĕсенче, парти аппаратĕнче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет.

Граждан вăрçи çулĕсенче Мехлис юлташ Украинăра бригада, дивизи тата çарсен Çыпăк çыравти ушкăнĕн çар комиссарĕ пулса Хĕрлĕ Çара тĕреклетме ĕçе, белогвардеецсемпе интервентсене хирĕç кĕрешсе çĕнтерме вăйне хурсах хутшăнать.

Граждан вăрçи хыççăн Лев Захарович Рабочисемпе Хресченсен Инспекцийĕн Халăх Комиссариатĕнче ертсе пыракан вырăнта, ун хыççăн Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн аппаратĕнче ĕçлет.

1930 çулта партин Центральнăй Комитечĕ Мехлис юлташа «Правда» хаçат редакцине ĕçлеме ярать. Партин Центральнăй Комитечĕн органĕнче ответлă вырăнта тăрса, вăл партипе совет халăхĕн тăшманĕсене хирĕç, пирĕн партин тĕп çул-йĕрне хÿтĕлесе хаяррăн кĕрешет.

1934 çулта партин XVII-мĕш съездĕнче Мехлис юлташа партин Центральнăй Комитечĕн членĕн кандидатне, XVIII-мĕшпе XIX-мĕш съездсенче Центральнăй Комитет членне суйланă.

1937 çултан пуçласа 1940 çулччен Л. З. Мехлис Хĕрлĕ Çарăн Политикăллă Тĕп Управленийĕн пуçĕнче тăрать, çарăн личнăй составне политикăллă боевой воспитани парас тĕлĕшпе пысăк ĕç туса иртерет. Мехлис юлташ Хасан кÿлли патĕнче тата Халхин-Гол районĕнче Японии захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкас ĕçе хутшăнать.

1940 çулхи сентябрь уйăхĕнче Л. З. Мехлиса СССР Государство Контроль Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартаççĕ. Кунта вăл социализмлă контроль ĕçне вăйлатас тата совет аппаратне лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк ĕç çапса ярать, государство дисциплинине тата совет законĕсене тĕреклетессишĕн вăйпа-хăвачпа ĕçлет.

Аслă Отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчех, парти решенийĕ тăрăх, Л. З. Мехлиса Совет Çарне ярать. Вăрçă çулĕсенче вăл фронтра армисемпе фронтсен Çар Совечĕсен членĕ пулса ĕçлет, Тăван çĕршыва ют çĕршыв захватчикĕсенчен хÿтĕлесе тĕлĕшпе тивĕçлĕ паттăрлăх кăтартать.

Отечественнăй вăрçă чарăннă хыççăн Л. З. Мехлис каллех СССР Государство Контроль Министерствине ертсе пыма тытăнать, кунта вăл йывăр чир ураран ÿкериччен, ывăнма пĕлмесĕр государствăн пысăк ĕçне туса пырать.

Ĕçĕн пур участокĕсенче те — çарта, государство органĕсенче, парти аппаратĕнче, пичетре—Мехлис юлташ хăйне хушнă ĕçе иксĕлми хăватпа тата революциллĕ хастарлăхпа туса пырать. Унăн Коммунистсен Партийĕпе совет халăхĕн интересĕсемсĕр пуçне урăх интересем пулман.

Вăл хăйĕнчен тата ытти работниксенчен нумай ыйтнă, тÿрĕ те кристал пек таса пулнă, Ленин—Сталин партийĕн çул-йĕрĕшĕн пĕтĕм вăйне хурса кĕрешнĕ, çавăнпа ăна партипе халăх тивĕçлипе юратса хисепленĕ.

Партипе совет халăхĕ умĕнче тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн, Совет Государствин хăватне строительстве активлă хутшăннăшăн тата командовани боевой заданийĕсене пурнăçланăшăн, социализмлă контроле тĕреклетнĕшĕн Правительство темиçе хутчен те Л. З. Мехлиса Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсем парса чыс тунă.

Ĕççыннисен ĕçĕшĕн паттăррăн кĕрешнĕ Л. З. Мехлис юлташăн çутă ячĕ пирĕн чĕресенче ĕмĕрлĕхе юлĕ, унăн çутă пурнăçĕ Ленин—Сталин партийĕн аслă ĕçĕшĕн, пирĕн халăх телейĕшĕн, пирĕн социализмлă Тăван çĕршывăн хăвачĕпе мухтавне тĕреклетессишĕн кĕрешмелли тĕслĕх пулса тăрĕ.

Мускаври ĕççыннисем ячĕпе КПСС Мускав хула комитет секретарĕ И. В. Капитонов юлташ сăмах калать.

И. В. Капитонов юлташ сăмахĕ

Юлташсем!

Мускав хулинчи ĕççыннисем Коммунистсен партийĕпе Совет государствин паллă деятелĕпе, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн членне Л. З. Мехлиса чĕререн хурланса юлашки çула ăсатаççĕ.

Лев Захарович юлташ хăйĕн пĕтĕм пурнăçне халăхăн аслă ĕçне, коммунизм строительстви ĕçне панă.

1918 çулхи март уйăхĕнче Мехлис юлташ Коммунистсен партине кĕнĕ. Çав вăхăтран пуçласа юлашки кунсене çитиччен вăл хăйĕн пĕтĕм вăйне, организаторла пултарулăхне хамăрăн Тăван çĕршыва малалла чечеклентерессишĕн тата унăн хăватне тĕреклетессишĕн кĕрешсе ĕçе панă.

Лев Захарович парти ăна ĕçлеме янă пур участоксенче те хăйне хушнă ĕçе коммуниста тивĕçлĕ хастарлăхпа туса пынă.

Граждан вăрçи çулĕсенче вăл Хĕрлĕ Çар чаçĕсене çар комиссарĕ пулса ăсталла ĕçленĕ.

Мирлĕ строительство çулĕсенче Мехлис юлташ Хĕрлĕ Çарăн Политикăллă Тĕп Управленийĕн пуçĕнче тăнă, совет воинĕсене политикăллă воспитани парас ĕçе ертсе пынă.

Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансанах парти ăна каллех Совет Çарĕнче ĕçлеме ярать.

Вăрçă çулĕсенче вăл фронтра армисемпе фронтсен Çар Совечĕсен членĕ пулса ĕçлесе иртерет. Совет Правительстви ăна генерал-полковник званине панă, çапăçури тава тивĕçлĕ ĕçĕсемшĕн Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсем парса наградăланă.

Мехлис юлташ совет социализмлă государствин активлă строительсенчен пĕри пулнине совет çыннисем пĕлсе тăраççĕ.

Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче вăл Рабочисемпе Хресченсен Инспекцийĕн Халăх Комиссариатĕнче ертсе пыракан вырăнта ĕçленĕ, вăрçă умĕн СССР Государство Контроль Халăх Комиссариатне ертсе пынă. Вăрçă çĕнтерÿллĕн вĕçленсен, ăна каллех СССР Государство Контроль Министрĕ пулма уйăрса лартнă. Государство дисциплинине тĕреклетессишĕн активлă кĕрешсе, вăл Совет государствин политика тĕлĕшĕнчен сыхăлăхлă пулма, хушнă ĕçшĕн ответлăх туйма, пĕтĕм халăх пулса лăпланса ларнине, тимсĕрлĕхе, çавăра карса ларнине хирĕç хаяррăн кĕрешме вĕрентнĕ.

Коммунистсемпе совет çыннисем Мехлис юлташ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн паллă деятелĕ пулнине пĕлеççĕ.

Вăл нумай вăхăт хушши партин Центральнăй Комитечĕн аппаратĕнче ĕçленĕ, «Правда» хаçат редакторĕ, партин Центральнăй Комитечĕн членĕ пулнă. Мехлис юлташ парти речĕсен тасалăхĕпе пĕтĕçÿлĕхĕшĕн, унăн тĕп çул-йĕрне тытса пырассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешнĕ.

Мускав ĕççыннисем Лев Захарович партин Мускав организацийĕн активлă участникĕ пулнине лайăх пĕлеççĕ. Ăна темиçе хутчен те партин Мускав комитечĕн членне тата ĕççыннин депутачĕсен Мускав хула Совечĕпе область Советне депутата суйланă.

Йывăр чирленĕ пирки вăл юлашки çулсенче вырăнах выртрĕ, çавăнпа та çĕршывăн общество-политикăллă пурнăçне халичченхи пек пысăк хăватпа хутшăнма пултараймарĕ. Анчах вăл партипе тата халăхпа çыхăнса тăрасси пĕр кунлăха та татăлман. Партин XIX-мĕш съездĕнче Мехлис юлташа çĕнĕрен пирĕн партин Центральнăй Комитечĕн членне суйланă.

Лев Захарович Мехлис юлташ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн шанчăклă ывăлĕ, Совет Тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕ пулнă, вăл хăйĕн пĕтĕм пурнăçне Ленин—Сталинăн аслă ĕçне панă.

Вилĕм ăна пирĕн хушăран илсе кайрĕ. Столицăри ĕççыннисем, пĕтĕм совет çыннисем пекех, Ленин—Сталин партийĕн шанчăклă ывăлĕн, пирĕн социализмлă Тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕн çутă ятне яланах асра тытĕç.

* * *

Хурлăхлă митинг пĕтет. Л. З. Мехлис çунĕн кĕлне хунă урнăна Кремль стени патне илсе пырса шăтăка лартаççĕ, вара ăна мрамор хăмапа витсе хураççĕ. Ун çине ылттăн саспаллисемпе çапла çырса хунă:

ЛЕВ ЗАХАРОВИЧ МЕХЛИС

13/I 1889 — 13/II 1953

Виçĕ хутчен туппăсенчен пенĕ салют кĕрлесе каять. Хурлăхлă марш выляни Совет Союзĕн Государство гимнĕн хăватлă кĕвви янрама пуçлать. Мавзолей умĕнчен çарсем иртеççĕ.

(ТАСС).

Колхозсенчи строительствăна лайăхлатассишĕн

Строительсен республикăри канашлăвĕнчен

Ялсемпе колхозсенчи строительство ĕçĕсен Управленийĕпе Ялхуçалăх министерстви февралĕн 12-мĕшĕнче строительсен республикăри канашлăвне ирттерчĕç. Канашлура райисполкомсен çумĕнчи строительство пайĕсен заведующийĕсем тата техникĕсем, çавăн пекех районсенчи ялхуçалăх пайĕсемпе МТС-сен техник-строительсем пулчĕç. Вĕсем республикăри колхозсене 1952 çулта строительство енĕпе тунă ĕçсем тата строительство тĕлĕшпе 1953 çулта тăракан задачăсем çинчен ялсемпе колхозсенчи строительство ĕçĕсен Управленийĕн начальникĕ Скворцов юлташ туса панă доклада сÿтсе яврĕç.

Вылăх-чĕрлĕх валли витесем тăвас ĕç 1952 çулта, унччен çулсенчи пекех, çителĕксĕр пулса пынă. Иртнĕ çулта витесем тумалли плана 10 район, кайăк-кĕшĕк çурчĕсем лартмалли плана 26 район тултарайман.

Строительство планне тултарассишĕн ялсемпе колхозсенчи строительство ĕçĕсен Управленийĕ тата унăн вырăнти органĕсем мĕнпур ответлăха туйса ĕçлемен. Вĕсем колхозсене строительство материалĕсемпе хатĕрлеме вăхăтра мобилизацилемен, ку ĕç хăй тĕллĕн пулса пынă. Строительство бригадисене çирĕплетме тăрăшман пирки те пысăк чăрмавсем пулнă.

Строительствăра вырăнти материалсемпе ытларах усă курмалла. Витесемпе ытти çурт-йĕрсем лартма саман кирпĕч, чул, шлак ытларах хатĕрлени кирлĕ. Ку вăл строительство хакне йÿнетме, çирĕп çурт-йĕрсем тума май парать. Ку тĕлĕшпе иртнĕ 2—3 çул хушшинче Елчĕк, Чкаловски, Вăрмар, Канаш, Чурачăк районĕсенчи колхозсем тăрăшса ĕçлерĕç. Анчах вырăнти строительство материалĕсемпе нумай районсенче, уйрăмах Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски, Çĕрпÿ, Советски, Элĕк, Пĕнерĕс районĕсенче начар усă кураççĕ.

Строительство ĕçĕнчи тепĕр пысăк çитменлĕх вăл — пахалăхшăн кĕрешменни. Пĕтĕмĕшпе илсен, строительство планне Шăхасан районĕ 228 процент тултарнă. Уйрăм ĕçсем тăрăх илсен, акă мĕн курăнать: лаша витисем тумалли плана район 52 процент, сысна витисем лартмалли плана 82 процент çеç тултарнă. Ку тĕлĕшпе ĕçсем ытти нумай районсенче тата та япăхрах.

Паллă ĕнтĕ, строительство ĕçĕсене пур кăтартусем енĕпе пурнăçласан кăна плана лайăх тултарнă теме пулать.

Ферма çурт-йĕрсене типовой проектсем тăрăх лартма кирлине строительсем аван пĕлеççĕ. Апла пулин те, ку тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Пĕлтĕр, сăмахран, пăру витисене 28 процент, сурăх витисене 23 процент, лаша тата ĕне витисене 14 процент, сысна витисене 10 процент, кайăк-кĕшĕк çурчĕсене 15 процент проектсăр тунă. Типовой проектпа лартакан çуртсене те нумай çĕрте пĕтĕмпех тĕрĕс тумаççĕ, с вĕсен сарлакăшне, в çÿлĕшне пĕчĕклетеççĕ. Чылай чухне тата витесене çутă çителĕксĕр пулать.

Витесене проектсем тăрăх тумалли тата проектсене пăсса тунă çурт-йĕрсем пысăк сиен кÿрет. Ун пек чухне фермăсенчи йывăр ĕçсене механизацилеме хĕн, вылăх-чĕрлĕхе зоотехника науки вĕрентнĕ пек пăхса усрама май килмест.

Строительство ĕçĕсене пурнăçласа пыракансен вылăх витисене çĕнĕрен тума тата юсанине анчах лайăхлатса лартмалла мар. Вĕсен колхоз производствинче кирлĕ ытти çурт-йĕрсене те çителĕклĕ тăвассишĕн кĕрешмелле. Калас пулать, пур районсенче те тенĕ пекех ку енĕпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Уйрăмах силос хывмалли лайăх шăтăксем, тырпул типĕтмелли çуртсем, витнĕ итемсем, кормокухнисем, урапа-çуна лартмалли сарайсем тăвасси юлса пырать.

1952 çулта пулнă канашлусенче çитменлĕхсенчен ялсемпе колхозсенчи строительство ĕçĕсен Управленийĕ, Ялхуçалăх министерстви тата вĕсен вырăнсенчи органĕсем тĕрĕс вывод тума тивĕçлĕ.

Колхозсенче 1953 çулта строительство ĕçĕсене пĕлтĕрхинчен пысăкрах пуласçĕ. Кăçал вылăх-чĕрлĕх валли, 1952 çулхипе танлаштарсан, 16 процент ытларах вите-картасем, икĕ хут ытла саман кирпĕч тумалла. Саман кирпĕчĕн лартакан çуртсен никĕсĕ валли 20 пин кубометр чул кăларма палăртнă.

Кăçал уйрăмах кайăк-кĕшĕк çурчĕсем, ĕне тата сысна витисем çине тимлĕ пăхмалла, мĕншĕн тесен республика ку енĕпе пĕлтĕр плана нумай тултарайман. 1953 çулта кашни колхозăн строительство планне пур енĕпе те тултармалла. Фермăсенчи вылăх-чĕрлĕхе лайăх пăхса усрама мĕн кирлине йăлтах тăвас пулать. Йывăр ĕçсене ытларах механизацилени кирлĕ.

Ĕç ăнăçлă пултăр тесен, хаиĕ пур колхозсенче те строительство бригадисене çирĕплетмелле. Вĕсене ертсе пыма пуçарулла тата ăста колхозниксене уйăрса лартни кирлĕ. Бригадăсене çителĕклĕ таран ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ, çавăн пекех тĕрлĕ ĕç хатĕрĕсемпе кирлĕ чухлĕ çирĕплетсе памалла. Бригадирсен квалификацине ÿстерме хĕлле семинарсем е кĕске вăхăтлăх курссем ирттерме кирлине те манăçа хăвармалла мар.

Ялсемпе колхозсенчи строительство ĕçĕсен Управленийĕпе Ялхуçалăх министерстви тата вĕсен вырăнсенчи органĕсен тивĕçĕ колхозсенчи строительствăна вăхăтра пулăшу парса тăрасси, строительство планне тултарма мобилизацилесси пулать. Ĕç хăвăртлăхне ÿстерме тата строительство пахалăхне лайăхлатма строительство бригадисене социализмлă ăмăртăва анлăн сармалла. Колхозсенче хĕлехи вăхăтра йывăç касса турттарса кăлармалла, чул, шлак, строительствăра кирлĕ пулакан ытти материалсене çителĕклĕ хатĕрлемелле.

Колхозсенчи строительствăшăн ответлă организацисем ертсе пырас ĕçе тĕпрен лайăхлатмалла. Унсăрăн ку ĕçра пулăхлăма пултараймасть.

Сăмах май каласан, канашлу кирлĕ пек ирттермерĕ. Ăна организацилекенсем ку тĕлĕшпе хăйсен ответлăхне кăтартрĕç. Канашлура пĕтĕмпе те пĕр колхоз председателĕ тата строительство бригадин бригадирĕсенчен пĕри анчах пулчĕç. Строительство ĕçне кирлĕ пек ертсе пымаллине çавă та кăтартса парать: докладчик строительствăра малта пыракан колхозсен, пуçарулла строительсен ячĕсемпе вĕсен пархатарлă ĕçĕсем çинчен пĕчĕк те каламарĕ. Паллă ĕнтĕ, çитменлĕхсене критикленипе пĕрлех малта пыракан опыта та пропагандăламалла.

Элĕк районĕнче васкамаççĕ

Элĕк районĕнчи колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕç чĕтма çук япăх пулса пырать. Чылай колхозсенче халĕ те тĕштырăсене тата вăрлăхлăх акса тунă курăксене çапса пĕтермен. Пăрса вăрлăхĕ 9 колхозра, ясмăкпа вика вăрлăхĕсем 21 колхозра, кантăр вăрри 19 колхозра, нумай çул ÿсекен курăксен вăррисем 26 колхозра çитмесçĕ. Унтан та ытларах, чылай колхозсен вăрлăх фондне нÿрĕ вăрлăх хывнă. «Красная заря», «Знамя коммунизма», Ленин ячĕпе, Пушкин ячĕпе тăракан, «Самолет» колхозсенче вăрлăх фондне хывнă тырпулсен нÿрлĕхĕ 17—25 процент çитет. Çапах та нÿрĕ вăрлăха типĕтме, тасатса акма юрăхлă тума тăрăшни курăнмасть-ха. Асăннă колхозсем вăрлăхсăр тăрса юлма та пултараççĕ.

Кăçал районти колхозсен кантăра иртнĕ çулхинчен чылай ытларах акмалла пулать. Анчах кантăр вăрри хатĕрлемелли плана 62 процент кăна тултарнă.

Район нумай çул ÿсекен курăксем акмалли плана çулталăк тултарса пыраймасть. Курăк вăррисем хатĕрлес ĕç кăçал та питĕ япăх. Февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне курăк вăррисем хатĕрлемелли плана пурĕ те 45,4 процент кăна тултарнă. Вăрлăхлăх ÿстерме курăксене чылай колхозсен саман, МТС-ăн клевер вăрри шĕкĕлчемелли машинисем пур, анчах вĕсемпе усă курмаççĕ. Колхозсен те клеверотеркăсем пур, анчах курăк вăрри шĕкĕлчес ĕçе çаплах кая хăварса пыраççĕ.

Хĕллехи агротехникăллă ĕçсене пурнăçлама та чылай колхозсенче тытăнман-ха. Шверник ячĕпе тăракан тата «Самолет» колхозсем кăна уй-хирте юр тытса пекки турĕç. Ытти колхозсем юр тытса хăварасси çинчен шутламан-ха.

Çуракин валли тислĕк хатĕрлесси те çавăн пекех. «Самолет», Куйбышев ячĕпе, Чкалов ячĕпе, Сталин ячĕпе, Киров ячĕпе тăракан колхозсем уя пĕр лав тислĕк те кăларман. Çав вăхăтрах Куйбышев ячĕпе, Пушкин ячĕпе тăракан колхозсенче вылăх витисенче тислĕк 1—1,5 метр çÿлĕш купаланса тунă. Минераллă удобренисемпе усă курасси çинчен районти колхозсенче сахал шухăшлаççĕ.

С. ТИХОНОВ.

„Совет" колхозран пример илмелле

ЧУРАЧĂК. «Совет» колхоз членĕсем çуракине лайăх хатĕрленеççĕ. Акмалли вăрлăхсене тасатса сортланă, районти лабораторире тĕрĕсленĕ. Вăрлăхсем пурте акма юрăхлă.

Колхоз çулсерен вăрлăха имсамласа акать. Кăçал та вăрлăха имсамламалли ымелсем: гексохлоран, нитрагин, гранозан çителĕклĕ хатĕрлерĕç.

Вăйлă тырпул хăй тĕллĕн пулмасть, ăна кĕрешсе илмелле. Колхозри ĕçхĕрсенчен кĕрхи çĕртме тунă çĕре юр тытса хăварчĕç, ун 5.100 лаптăк тислĕк тасарса штабĕлесе хучĕç. 50 центнер ытла кайăк-кĕшĕк тислĕкне юпа пухнă. Вĕсене типĕ çĕре пуçтарса хунă.

Колхоз çуракинче минераллă удобренисемпе те усă курать. Кĕрхи çĕртме тунă чухне кашни гектар çине 20-шер тонна тислĕк тата минераллă удобрени тăкнă. Кĕрхи тырăсене тата нумай çул ÿсекен курăксене çуркунне апатлама 70,6 центнер селитрĕ, 90,6 центнер суперфосфат, 202,6 центнер хлорлă калий хатĕрлесе хунă.

Халĕхи вăхăтра колхозра машинăсем юсаççĕ. Тимĕрçĕ лаççинче иртен пуçласа каçченех хĕрÿ ĕç пырать. Тимĕрçĕ В. Яковлев юлташ 14 плуг, 6 сеялка, культиватор, уй сулмалли машина тата сÿресене юсарĕ.

Уй-хирти нумай ĕçсене механизациленĕ пулин те лаша вăйĕ колхозра питĕ кирлĕ. Çавăнпа кунта лашасене тумалла пулать. Çавăнпа лашасене, çуракине тухичченех пĕр уйăх малтан пур ĕçсенчен те хăтарса, лайăхрах апатпа тăрантарма пуçласçĕ. Çуракине лашасене тăрантарма фураж çителĕклĕ.

В. ПРОКОПЬЕВ, агроном.

Культурăллă пурнăç хроники

★ Вулакансен конференцийĕсем. Красноармейски районĕн центральнăй библиотекинче вулакансен конференцийĕсем час-часах иртереç. Юлашки вăхăтра Н. Островскин «Хурçă мĕнле хĕрнĕ», К. Турхановăн «Инăрăлă ял» кĕнекисем тăрăх конференцисем иртерчĕç. Халĕ Е. Николаева çырнă «Жатва» кĕнеки тăрăх конференци иртерме хатĕрленеççĕ.

Г. ЛУКИН.

★ Телефон кĕртеççĕ. Советски районĕнчи Мăн Чураш ял Советĕнчи колхозсемпе учрежденисене телефон кĕртесси вăйлă сарăлса пырать. Иртнĕ çулта «Авангард» колхоз правленийĕ, клуба, вăтам шкула телефон кĕртрĕç. Çитес вăхăтрах колхоз бригадисене хĕлесемпе те телефон кĕр…

И. СЕРГЕЕВ.

Вăйлă тырпулшăн тăрăшни

УЛАТĂР. «Победа» колхоз кăçал кашни гектартан 23 центнертан кая мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешет. Колхозниксем, вырăнти Советсен суйлавне ирттерме хатĕрленнипе пĕрлех, çак кунсенче пулса иртнĕ хăйсен пĕрлехи пухăвĕнче вăйлă тырпулшăн кампани тÿрĕ вăйлăна кĕрешме сăмах парса социализмлă ăмăртăва хутшăннă. Çавăнпа колхозри бригадирсем ... Долгополов, С. Зельников, М. Янин тимĕрçĕсем плугсене, сÿресемпе культиваторсене юсаса лартрĕç тата 15 сеялка юсарĕç.

Колхозниксем вăйлă тырпул туса илессишĕн келлех хĕллехи ĕçсене пурне те тĕплĕн пурнăçласа пыраççĕ. Хĕле кĕричченех уй-хире 4 пин лав тислĕк кăларнă. Вырăнти удобренисене кăларса пыраççĕ, йăлтах уя, сурака тата хура çĕртме пуссине кăлараççĕ. Колхоз 600 центнер минераллă удобрени илнĕ.

Н. КОЛЕСОВ.

Тӗнчери лару-тӑру

СОВЕТ СОЮЗӖПЕ ВЕНГРИ ХУШШИНЧИ СИРӖП ТУСЛӐХ

Совет Союзӗпе Венгри Халӑх Республикин пӗр-пӗрине туслӑ пурӑнасси, килӗштерсе ӗҫлесси тата пӗр-пӗрне пулӑшасси ҫинчен договор туса алӑ пуснӑранпа февралӗн 18-мӗшӗнче 5 ҫул тултарать.

Договор тунӑранпа иртнӗ вӑхӑт Совет Союзӗпе Венгри хушшинчи договор питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнине ҫирӗплетсе пачӗ. Пӗр-пӗрине туслӑ пурӑнса, Совет Союзӗнчи тата Венгрири халӑхсем мире сыхласа хӑварас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫ тӑваҫҫӗ, пӗр-пӗрине килӗштерсе ӗҫлес тӗлӗшпе тӗслӗх кӑтартаҫҫӗ. Вӑл туслӑх пӗр-пӗрне хисеплени ҫинче никӗсленсе тӑрать.

Совет Союзӗн пулӑшӑвӗ ҫине таянса тата унӑн социализм строительствинчи питӗ пуян опычӗпе усӑ курса, ирӗке тухнӑ Венгри халӑхӗ, Венгрири ӗҫҫыннисен партийӗ ертсе пынипе, ҫӗршывра демократиллӗ пысӑк улшӑнусем турӗ, халӗ пилӗк ҫуллӑх плана ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртсе пырать. Вӑл пилӗк ҫуллӑх план социализм обществин экономикӑллӑ ҫирӗп никӗсӗсене хывӗ.

«Венгри халӑх демократине экономика тата политика тӗлӗшӗнчен Совет Союзӗ тата Сталин юлташ хӑй ырӑ кӑмӑлпа тӑвакан пулӑшнӑ, халӗ те пулӑшать,—тет Матьяс Ракоши,—ҫакна пула пирӗн ирӗке тухнӑ ӗҫхалӑхӗн вӑйӗсем темиҫе хут ӳсрӗҫ... Ҫакӑн пек ырӑ кӑмӑлпа тата тӑвакан пулӑшни пире йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме, пирӗн Тӑван ҫӗршыва кая юлнӑ ялхуҫалӑхлӑ ҫӗршывран индустриллӗ, социализм тӑвакан ҫӗршыв тума май пачӗ».

Кашни ҫулах Венгри халӑхӗ ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тӑвать. Уйрӑммӑнах республикӑна индустриализацилес енӗпе тунӑ ҫитӗнӳсем пысӑк. Халӗ ҫӗршыври промышленность производствин калӑпӑшӗ вӑрҫӑчченхи шайран 3 хут ытла иртет. 1952 ҫулта — пилӗкҫуллӑхӑн виҫҫӗмӗш ҫулӗнче — фабрикӑсемпе заводсем туса кӑларакан продукци, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 23,7 процент, йывӑр промышленность продукцийӗ — 33,3 процент тата ҫӑмӑл промышленность продукцийӗ—10,5 процент ӳснӗ. Ҫакӑн пек чаплӑ ҫитӗнӳсене хастарлӑ ӗҫленипе тума пултарнӑ. Вӑл ҫитӗнӳсем пилӗк ҫуллӑх плана срокчен тултарассине ҫирӗплетсе параҫҫӗ.

Венгрири предприятисенче нумай ҫӗнӗ те кӑткӑс машинӑсем, вӑл шутра комбайнсем, экскаваторсем, тӗрлӗ станоксемпе моторсем туса кӑларассине йӗркеленӗ. Венгрири рабочисем Совет Союзӗнчи стахановецсен малта пыракан ӗҫ меслечӗсемпе анлӑн усӑ кураҫҫӗ. Производство планӗсене срокчен тултарассишӗн, продукци туса кӑларассине ӳстерессишӗн тата унӑн пахалӑхне лайӑхлатассишӗн пур ҫӗрте те социализмлӑ ӑмӑрту сарӑлнӑ.

Ҫӗршывӑн тӗрлӗ районӗсенче промышленноҫӑн ҫӗнӗ объекчӗсене, вӑл шутра пилӗкҫуллӑхӑн питӗ пысӑк стройкине — Сталин ячӗпе тӑракан металлурги комбинатне тӑваҫҫӗ. Ҫак предприяти ӗҫе кӗнӗ хыҫҫӑн чугун шӑратса кӑларасси, вӑрҫӑчченхи шайпа танлаштарсан, 4 хута яхӑн, хурҫӑ шӑратса кӑларасси икӗ хут ӳсет. Хартобаль ҫеҫенхирӗнче Тисса леш енче тӗп канала тӑваҫҫӗ. Унӑн тӑршшӗ 97 километр пулать. Дьендеш, Капошвара тата республикӑн ытти промышленность центрӗсенче пысӑк строительство пырать.

Венгри ялхуҫалӑхӗ вӗҫӗмсӗр аталанса пырать. Унӑн техникӑллӑ ҫирӗп базине тӑваҫҫӗ. Ҫӗршыври заводсем ялсене ялхуҫалӑх машинисем, ытти хатӗрсемпе химиллӗ удобренисем парса тӑраҫҫӗ. Акмалли ҫӗр лаптӑкӗ ҫултан-ҫул пысӑкланать, мелиораци тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса ирттереҫҫӗ. Халӗ Венгрире шӑварса тӑракан ҫӗрсен лаптӑкӗ Хорти режимӗ чухнехинчен 6 хут пысӑкрах. Республикӑра производствӑллӑ ҫӗр ӗҫ кооперативӗсем ҫултан-ҫул нумайланса пыраҫҫӗ. Вӗсем хальхи вӑхӑтра хресченсен 280.000 хуҫалӑхне ытла пӗрлештерсе тӑраҫҫӗ.

Халӑх власӗ ӗҫҫыннисен пурнӑҫ условийӗсене лайӑхлатассишӗн куллен тӑрӑшать. Ӗҫҫыннисене апат-ҫимӗҫ тата кулленхи кирлӗ таварсем парса тӑрассине тӑтӑшах лайӑхлатса пырать. Ӗҫҫыннисем валли ҫӗнӗрен ҫӗршер больницӑсем, амбулаторисем, канмалли ҫуртсемпе санаторисем туса лартнӑ. Культурӑллӑ пысӑк строительствӑна пурнӑҫлаҫҫӗ.

Венгри халӑхӗ пек, ҫӗршывра халӑх хуҫа пулса тӑнӑ вӑхӑтри пек, нихҫан та малалла хӑвӑрт аталанайман. Социализм строительстви Венгрири мӗнпур патриотсен тӑван ӗҫӗ пулса тӑнӑ. Рабочи класӑн авангарчӗ — Венгрири ӗҫҫыннисен партийӗ тавра тачӑ пӗтӗҫсе, вӗсем ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем патне шанчӑклӑн пыраҫҫӗ, хӑйсем ҫӗнсе илнисене тӑшмансен усал та чее ӗҫӗсенчен сыхлаҫҫӗ. Совет Союзӗпе Венгри хушшинчи туслӑха тата пӗр-пӗрине килӗштерсе ӗҫлесе пурӑнассине тӗревлетсе пынинче ҫӗнӗ Венгри строителӗсем хӑйсен малашнехи ҫитӗнӗвӗсен ҫирӗп шанӑҫне курса тӑраҫҫӗ.

ФРАНЦИ ХАЛӐХӖ «ЕВРОПА ҪАРНЕ» ТӐВАССИНЕ ХИРӖҪ

Икӗ эрне каярах Франци правительстви, Вашингтонран ҫине тӑрса хушнине пурнӑҫласа, «Европа ҫарӗ» текенскерӗ ҫинчен тунӑ договора тата унпа ҫыхӑннӑ килӗшӳсене ҫирӗплетесси ҫинчен хатӗрленӗ закон проектне Наци пухӑвне тӑратнӑ. Жюль Мок социалиста тата деголлевец Кӗниг генерала ку ыйту тӑрӑх докладсем хатӗрлеме хушнӑ, ун хыҫҫӑн парламентра сӳтсе явма тытӑнаҫҫӗ.

Ҫӳлте асӑннӑ, 1952 ҫулхи майӑн 27-мӗшӗнче Парижра алӑ пуснӑ договор 6 ҫӗршывӑн—Францин, Италин, Хӗвеланӑҫ Германин, Бельгин, Голландин тата Люксембургӑн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсенчен «Европа ҫарне» тума палӑртать. Америка империалисчӗсемпе вӗсен «союзникӗсем» ку ҫарӑн тупсӑмӗпе тӗллевӗсене пытарма тӑрӑшаҫҫӗ пулин те, политикӑна япӑх ӑнланакан ҫынсемшӗн те ҫакӑ паллӑ: ҫӑмах Германи вермахтне тепӗр хут тӑвасси ҫинчен пырать. Хӗвеланӑҫ Германири нимӗҫ офицерӗсем ертсе пыракан дивизисем тума палӑртакан «Европа ҫарӗн» тӗп тӗрекӗ пулмалла.

«Европа ҫарне» туни мӗн патне илсе пынине Францири шултра буржуазин пичет органӗ — «Монд» хаҫат йышӑнни кӑтартса парать. Вӑл хаҫат ҫапла ҫырать: договора ҫирӗплетни «парламента тата пӗтӗм ҫӗршыва хӑйсен суверенитетне ҫухатасси патне илсе пыма пултарать». Ҫакӑн пек шикленнине ӑнланмалла: договор вӑй илнӗ хыҫҫӑн, Франци, чӑннипе илсен, хӑйӗн ҫарне тӗрӗслесе тӑма пултараймасть. Унӑн ҫарне «Европа комиссариачӗн» аллине параҫҫӗ. Франци парламенчӗ мар, ҫав комиссариат ӗнтӗ Францин хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен хисепне, служба срокне, ҫар валли мӗн чухлӗ укҫа уйӑрмаллине палӑртса тӑракан пулать.

Франци халӑхӗ договора ҫирӗплетессине ытларах та ытларах хирӗҫ тӑнине шута илсе, «Европа ҫарне» тӑвассине хавхалантарса пыраканӗсем—Америка империалисчӗсем — Францири влаҫра тӑракан ушкӑнсене ытларах хӗсеҫҫӗ, вӗсене хӑвӑртрах решени йышӑнтарма хистеҫҫӗ. «Комба» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Америка сенаторӗ Уайли ҫапла хӑратса каланӑ: «Европа ҫарӗ» ҫинчен тунӑ договора ҫирӗплетессине Франци вӑраха хӑварсан, США Франципе укҫа парса пулӑшма пӑрахать. Америкӑри биржевиксен хаҫачӗ «Уолл-стрит джорнэл» уҫҫӑнах ҫапла ҫырать: «Европа ҫарне тума тытӑнса тӑракан французсене ҫакӑн ҫинчен асӑрхаттарма пулать: Германин экономики, вӑл оборонӑшӑн тӑрӑшмасть пулсан, Францие тӗнчери рынокран хӗссе кӑларма пултарать»...

Анчах Франци халӑхӗ Хӗвеланӑҫ Германие тепӗр хут милитаризациленӗ хыҫҫӑн мӗнле хӑрушлӑх тухса тӑнине питӗ лайӑх ӑнланать. Ҫавӑнпа та халӑх Хӗвеланӑҫ Германири реваншистла ҫара ҫӗнӗрен тунине хирӗҫ тӑрать, кӗрешӳ кунсерен вӑйланнӑҫемӗн вӑйланать. Ахальтен мар ӗнтӗ «Монд» хаҫат ҫапла паллӑ тӑвать: «договора ҫирӗплетме лару-тӑру йӗркеллӗ мар». «Се Матэн-ле пэн» хаҫат «парламентӑн ытларахӑшӗ хушшинче пӑлханусем» пуласси ҫинчен ҫырать.

Французсем «Европа ҫарне» тӑвассине татӑклӑн хирӗҫ тӑнине пула, влаҫра тӑракан нумай паллӑ ҫынсен те шухӑшлама тивет. Ҫӑмахран, ҫакӑ паллӑ: Францин Венсан Ориоль тата Эдуард Эррио пек паллӑ деятельсем те хӑйсем договора ҫирӗплетессине ырламанни ҫинчен каланӑ.

Договора Наци пухӑвӗнче сӳтсе явнӑ чухне, паллӑ ӗнтӗ, вӑйлӑ хирӗҫӳсем пулӗҫ. Америка политики майлӑ ӗҫлекенсем ҫак решение, Вашингтонра кӗтсе тӑнӑ пек, ҫӑмӑллӑн йышӑнтарма пултараймӗҫ. Франци халӑхӗ вӑл решенипе ниепле те килӗшме пултараймасть.

Германири Коммунистсен партийӗн правленийӗ, Францири Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗ тата Германири Социалистсен пӗрлӗхлӗ партийӗ нимӗҫ тата француз халӑхӗсене чӗнсе каланӑ. Унта ҫакна шанса тӑнине палӑртнӑ: Америка агрессорӗсен тата вӗсем майлӑ ӗҫлекенсен преступниклӑ планӗсене пурнӑҫлама ирӗк памӗҫ. «Пирӗн халӑхсем,—тенӗ чӗнсе каланинче, — пысӑк ҫӗнтерӳ турӗҫ ӗнтӗ, мӗншӗн тесен вӗсем Бонра тата Парижра алӑ пуснӑ договорсене ҫирӗплетме ку таранччен ирӗк памарӗҫ. Вӗсем хӑйсен кӗрешӗвне вӑйлатса пырсан, ҫав договорсене ҫирӗплетессине пуҫпех чарса лартма пултарӗҫ».

ШВЕЦИ «НЕЙТРАЛИТЕЧӖН» ХӐТТИНЧЕ

Юлашки вӑхӑтра ют ҫӗршывсенчи хаҫатсем час-часах ҫакӑн ҫинчен ҫыраҫҫӗ: Швецири влаҫра тӑракан ушкӑнсем нейтралитет ҫинчен каласма юратаҫҫӗ, анчах ку тӗрӗс мар. Тӗрӗссипе илсен, ҫак ҫӗршыв агрессиллӗ Ҫурҫӗр-Атлантика блокӗпе активлӑрах та активлӑрах килӗшсе ӗҫлет.

Нумаях пулмасть Финляндири хаҫатсенче Стокгольмран пӗлтернине пичетлесе кӑларнӑ. Унта Швеципе Пӗрлешӳллӗ Штатсем хушшинче вӑрттӑн ҫар килӗшӗвӗ туни ҫинчен ҫырнӑ. Ҫав килӗшӳ тӑрӑх, Швеци ячӗшӗн кӑна Атлантика блокӗн тулашӗнче тӑрса юлать, тӗрӗссипе илсен, ҫав блокпа пӗрле вӑрҫа хатӗрленнӗ ҫӗре хутшӑнать. Швеци правительствине хӗҫпӑшалсем тата ҫар материалӗсем парса «пулӑшма» сӑмах панӑ, Швеци вара ҫав «пулӑшушӑн» США-на е, США кӑтартӑвӗ тӑрӑх, Хӗвеланӑҫ Европӑри государствӑсене стратегиллӗ чӗртавар парса тӑма тивӗҫлӗ.

Швецири хаҫатсем ҫакӑн пек пӗлтернине хирӗҫлеме хӑтланнӑ, анчах ун пек тума ҫӑмӑлах пулман. Фактсене пушӑ сӑмахсемпе сирсе яма ҫук. Швеци Атлантика блокӗпе таҫанах ҫыхӑнса ӗҫлени пурне те паллӑ. Швеци, Маршалл планне организациленӗ ҫӗре активлӑ хутшӑннӑ, вӑл Европа совечӗн, ҫӗр кӑмрӑкӗпе хурҫӑ промышленноҫӑн Европӑри пӗрлешӗвӗн членӗ пулса тӑрать, ҫавӑн пекех Ҫурҫӗр советӗнче тӑрать. Ҫурҫӗр советне, Швецисӗр пуҫне, агрессиллӗ блокӑн ытти членӗсем—Дани, Норвеги тата Исланди хутшӑнаҫҫӗ.

Швецири Коммунистсен партийӗн председателӗ Хагберг ҫак кунсенче парламентра ҫапла каланӑ: «хальхи вӑхӑтра влаҫра тӑракан ушкӑнсем, ҫавӑн пекех ҫӗршыври банкирсем Атлантика блокӗпе килӗшеҫҫӗ, вӗсем ҫав блока мӗн вӑй ҫитнӗ таран пулӑшаҫҫӗ... Швецие хӗҫпӑшаллантарасси Атлантика блокӗнчи ҫӗршывсене хӗҫпӑшаллантарассипе пӗр пек пулса пырать. Швеци Англире туса кӑларнӑ самолетсемпе танксене, Америкӑра туса кӑларнӑ радарнӑй оборудование сутӑн илет».

Швецири буржуалла деятельсем хӑйсем «Европӑри пӗрлешӳпе» хӑвӑртрах ҫыхӑнма тӑрӑшнине пытармаҫҫӗ. Сылтӑм партин лидерӗ Яльмарсон парламентра ним пытарса тӑмасӑр «Швеци ытти ҫӗршывсенчен уйрӑлассишӗн тӑрать тесе тӗрӗс мар шухӑшланине» пӗтерме кирлине кӑтартса панӑ, «Хӗвеланӑҫ Европӑпа уҫҫӑнах ҫыхӑну тытма» чӗнсе каланӑ.

Атлантика блокӗн участникӗсемпе пӗр тан пыма тӑрӑшса, Швецири влаҫра тӑракан ушкӑнсем ҫар бюджетне ӳстерсе пыраҫҫӗ, хӗҫпӑшал хатӗрлессине хӑвӑртлатаҫҫӗ. Вӗсем ҫӗршывӑн наци суверенитетне те ҫухатма хатӗр. Нумаях пулмасть конституцие улӑштарасси ҫинчен панӑ сӗнӗве парламентра пӑхса тухма тӑратнӑ. Швецири телеграф бюровӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, сӑмах Швеци суверенитетне «государствӑран ҫӳлерех тӑракан влаҫа» пӑхӑнтарасси ҫинчен пырать. Ҫавна май «Ню даг» ҫапла паллӑ тӑвать: «Каярахпа государствӑран ҫӳлерех тӑракан власть вӑл США пулни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ пулмалла».

Д. БОЧАРОВ.

Корейӑри ӗҫсем

ХАЛӐХ ҪАРӖН ГЛАВНӐЙ КОМАНДОВАНИЙӖ ПӖЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн Главнӑй командованийӗ паян ҫапла пӗлтерчӗ: иртнӗ кун хушшинче Халӑх ҫарӗн соединенийӗсемпе Китай Халӑх добровольцӗсен чаҫӗсем пур фронтсенче те Америкӑпа Англи интервенчӗсене хирӗҫ тата Ли Сын Ман ҫарӗсене хирӗҫ артиллерирен персе тӑнӑ.

Ӗнер ҫӗрле Америкӑн «В-29» йышши бомбардировщикӗсем Пхеньян ҫывӑхӗнчи мирлӗ халӑх пурӑнакан районсем ҫине, унта нимӗнле ҫар объекчӗсем ҫук пулин те, каллех тискеррӗн бомбӑсем пӑрахнӑ.

Халӑх ҫарӗн зенитнӑй чаҫӗсем тата самолетсене хирӗҫ кӗрешекен салтакӗсем паян тӑшманӑн 5 самолетне персе ӳкернӗ.

ПХЕНЬЯН, февралӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн Главнӑй командованийӗ паян ҫапла пӗлтерчӗ: иртнӗ кун хушшинче фронтсенче улшӑнусем пулман.

Халӑх ҫарӗн зенитнӑй чаҫӗсем тата самолетсене хирӗҫ кӗрешекен салтакӗсем паян тӑшманӑн 6 самолетне персе ӳкернӗ.

Агиос-Евстратиос утравӗ ҫинчи вилӗм лагерӗ

СОФИЯ, февралӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Болгарири телеграф агентстви ҫапла пӗлтерет:

Эллас Пресс агентстви ҫыру пичетлесе кӑларнӑ. Вӑл ҫырӑва Агиос-Евстратиос утравӗ ҫине ссылкӑна янӑ Папаланопулоспа Хетакис врачсем утрав ҫинче Грецин ссылкӑра пурӑнакан 1.249 патриочӗ ячӗпе темиҫе кун каярах Греци правительствине, Хӗрлӗ Хӗресӗн Пӗтӗм тӗнчери Комитетне, Хӗрлӗ Хӗресӗн мӗнпур ҫӗршывсенчи обществисене тата пӗтӗм тӗнчери демократиллӗ общественность патне ярса панӑ.

Ку ҫырура ҫапла каланӑ: 1952 ҫулхи ноябрь уйӑхӗнче врачсем пӑхнӑ чухне ҫакна палӑртнӑ: Грецин ҫак пушхирлӗ утрав ҫине янӑ 1.249 патриотран 49-шӗ кӑна пур енчен те сывӑ пулнӑ. Ытти ҫынсем ревматизмпа, туберкулезпа, нӳре чирӗпе, бронхитпа, пӗвер чирӗсемпе асапланаҫҫӗ, 83 ҫын ӑсран тухнӑ.

Ҫырура малалла ҫакна палӑртнӑ: Агиос-Евстратиос утравӗ ҫине ссылкӑна янӑ ҫынсем питӗ йывӑр условисенче пурӑнаҫҫӗ, вӗсене нимӗнле медицина пулӑшӑвӗ те памаҫҫӗ. Ерекен чир-чӗрсемпе асапланакансене, вӑл шутра туберкулезпа чирлӗ ҫынсене концентрационнӑй лагере халӗ те илсе пыраҫҫӗ. Вӑл ҫынсем ыттисене чир ертеҫҫӗ.

Юлашкинчен Папаланопулоспа Хетакис врачсем Грецин 1.249 патриочӗ ячӗпе мӗнпур чирлӗ ҫынсене пӗр тӑхтаса тӑмасӑр ирӗке кӑларма ыйтаҫҫӗ.

Пӗтӗм тӗнчери шахмат турнирӗнче

БУХАРЕСТ, февралӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Пӗтӗм тӗнчери шахмат турнирӗн 12-мӗш вӑййи хыҫҫӑн Болеславскипе Толуш малта пыраҫҫӗ, вӗсем 8-шар очко пухнӑ: Петросянпа Л. Сабо (Венгри)—7,5-шер очко, Смыслов 7 очко пухнӑ.

Пӗтӗм тӗнчери шахмат турнирӗн 13-мӗш вӑййинче Петросянпа (СССР) Ш. Сабо (Румыни) хушшинчи, Смысловпа (СССР) Слива (Польша) хушшинчи, Бардапа (Норвеги) Толуш (СССР) хушшинчи, Рэдулескупа (Румыни) Штольц (Швеци) хушшинчи партисем пӗр-пӗрне ҫӗнтерейменнипе вӗҫленнӗ.

Румыни шахматисчӗсен — Чоколтяпа Рейхер хушшинчи партире Чоколтя ҫӗнтернӗ. О'Келли (Бельги) Англи мастерӗнчен Голомбекран выляса илнӗ. Ытти партисене тепӗр вӑхӑта хӑварнӑ.

БУХАРЕСТ, февралӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Паян Пӗтӗм тӗнчери шахмат турнирӗнче тепӗр вӑхӑта хӑварнӑ партисене выляса пӗтернӗ. Венгри гроссмейстерӗ Л. Сабо Сливапа (Польша) тата Филиппа (Чехословаки) выляса партисенче хӑй парӑнни ҫинчен пӗлтернӗ. Радулеску (Румыни) Шайтара (Чехословаки) парӑннӑ.

Смыслов гроссмейстер Барцана (Венгри) ҫӗнтернӗ.

Петросян 55 хут ҫӳренӗ хыҫҫӑн Штольцран (Швеци) выляса илнӗ. Спасский Рейхера (Румыни) ҫӗнтернӗ, Филиппа (Чехословаки) выляса янӑ.

Нумай вӑхӑт хушши пынӑ кӗрешӳ хыҫҫӑн Л. Сабо (Венгри) Болеславскирен (СССР) выляса илнӗ. Штольц (Швеци) Милева (Болгари) ҫӗнтернӗ. Троянеску (Румыни) Рэдулескуна (Румыни) ҫӗнтернӗ, Шайтара (Чехословаки) выляса янӑ. Милев Барцана (Венгри) парӑннӑ. Барцапа (Венгри) Чоколти (Румыни), Ш. Сабопа (Румыни) Милев (Болгари) пӗр-пӗрне ҫӗнтерейми.

13 вӑййӑ хыҫҫӑн Совет Союзӗн шахматисчӗсем Петросянпа Толуш малта пыраҫҫӗ. Вӗсем 13 очко илме май пур ҫӗртен 9-шар очко пухнӑ. Болеславскин (СССР), Смысловӑн (СССР) тата Л. Сабон (Венгри)—8,5-шер очко.

Спорт хыпарӗсем

Облпрофсовет парнине илессишӗн

Облпрофсовет февралӗн 14—15-мӗшӗсенче, Шупашкарта, йӗлтӗрпе чупса республикӑра мала тухассишӗн ӑмӑрту ирттерчӗ. Ҫакӑн пек ӑмӑртӑва Облпрофсовет виҫҫӗмӗш хут ирттернӗ. Кӑҫалхи ӑмӑртӑва 37 коллективран 149 арҫын, 128 хӗрарӑм хутшӑнчӗ.

Положени тӑрӑх участниксенчен тӑватӑ ушкӑн тунӑ. Пӗрремӗш ушкӑнра — спорт обществисен командисем, иккӗмӗшӗнче — профсоюз обкомӗсен, виҫҫӗмӗшӗнче — пысӑк предприятисен, завкомӗсен, тӑваттӑмӗшӗнче—Шупашкар хулинчи учрежденисенчи профсоюз месткомӗсен командисем пулнӑ.

Ӑмӑрту участникӗсем хӗрсем — 3,5 тата 10 километр, арҫынсем 10, 18 тата 30 километр ӑмӑртса чупрӗҫ, слалом меслечӗпе ярӑнчӗҫ, трамплин ҫинчен сикрӗҫ.

Хӗрарӑмсем виҫӗ километр ӑмӑртса чупнӑ ҫӗре 87 спортсменка хутшӑнчӗ. Вӗсем хушшинче паллӑ спортсменкӑсем—Губанова, Биктимирова, Краснослова, Дорофеева, Емельянова, Вилюнова, Мясникова тата ыттисем те.

Ҫак дистанцие Губанова (медработниксен профсоюз обкомӗ) 15 минут та 11 секундӑра чупса тухса малти вырӑна йышӑнчӗ. Иккӗмӗш вырӑнта Дорофеева.

Пӗр вӑхӑтрах арҫынсем 10 километр ӑмӑртса чупма старта тухрӗҫ. 98 спортсмен малти вырӑна тухассишӗн кӗрешрӗ. Ӑмӑрту малтан пуҫласа вӗҫне ҫитиччен вӑйлӑ пулчӗ. Ҫак дистанцие 38 минут та 51 секундӑра чупса тухса, М. Михайлов спортсмен мала тухрӗ. Вишневский (электроаппаратура завочӗ) иккӗмӗш вырӑна, Филиппов («Труд») виҫҫӗмӗш вырӑна тухрӗҫ.

Кировски поселок ҫывӑхӗнче слалом меслечӗпе ярӑнса ӑмӑртрӗҫ. Кунта арҫынсенчен художество училищинче вӗренекен студент Шеин, хӗрарӑмсенчен Биктимирова мала тухрӗҫ.

Ӑмӑртун иккӗмӗш кунӗ арҫынсем 18 километр тата 30 километр, хӗрарӑмсем 5 километр тата 10 километр ӑмӑртса чупнипе пуҫланчӗ.

Хӗрарӑмсенчен 5 километра Губанова пуринчен те хӑвӑрт чупса тухрӗ. Унӑн вӑхӑчӗ 25 минут та 50 секунд. Иккӗмӗш вырӑнта — Биктимирова спортсменка. 10 километра Жачева (медработниксен профсоюзӗн обкомӗ) 55 минут та 25 секундра чупса тухрӗ, малти вырӑна йышӑнчӗ.

Ҫав вӑхӑт тӗлне арҫынсем 18 километр ӑмӑртса чупасси те вӗҫленнӗ. Ку дистанцие хӑвӑрт чупса тухса М. Михайлов спортсмен лайӑх тӗслӗх кӑтартрӗ. Унӑн вӑхӑчӗ 1 сехет те 11 минут тата 07 секунд. Ҫакӑ М. Михайловӑн ӑмӑртури иккӗмӗш ҫӗнтерӗвӗ пулчӗ.

30 километр ӑмӑртса чупасси те питӗ вӑйлӑ кӗрешӳпе иртрӗ. Вишневский (электроаппаратура завочӗ) малтан пуҫласа вӗҫне ҫитиччен хӑвӑртлӑхя чакармасӑр пычӗ, ҫак дистанцие 2 сехет те 10 минут та 29 секундра чупса тухса пӗрремӗш вырӑн йышӑнчӗ.

Икӗ кун ӑмӑртнӑ хыҫҫӑн пӗрремӗш ушкӑн тӑрӑх «Искра» спорт обществи, пӗлтӗрхи чемпион, мала тухрӗ. Иккӗмӗш вырӑнта «Молния» спорт обществи, «Труд» спорт обществи виҫҫӗмӗш вырӑн йышӑнчӗ.

Иккӗмӗш ушкӑн тӑрӑх нумайрах очко пухса пуҫламӑш тата вӑтам шкул работникӗсен профсоюзӗн обкомӗ йышӑнчӗ. Виҫҫӗмӗш ушкӑн енӗпе (24,5 очко пухса) пуҫламӑш тата вӑтам шкул работникӗсен профсоюзӗн хула комитечӗ мала тухрӗ. Куславккари пурӑнмалли ҫуртсем тӑвакан завод коллективӗ иккӗмӗш вырӑнта.

Тӑваттӑмӗш ушкӑн енӗпе пӗрремӗшпе иккӗмӗш вырӑнсене поликлиникӑпа лента тӗртекен фабрика коллективӗсем пайларӗҫ. Вӗсен 15-шер очко.

Мала тухнӑ командӑсене Облпрофсоветӑн куҫса ҫӳрекен парнисене панӑ.

Болгарире хутпӗлменлӗхе пӗтереҫҫӗ

СОФИЯ, февралӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Культа Сутӗҫ министерствин представителӗсен, профсоюзсен Центральнӑй совечӗн, библиотекӑсемпе пулас ҫурчӗсен Союзӗн Центральнӑй совечӗн, Ҫамрӑксен Димитров Союзӗн Центральнӑй Комитечӗн представителӗсен канашлӑвӗ пулса иртнӗ. Канашлура Болгарире хутпӗлменлӗхе пӗтересси ҫинчен сӳтсе явнӑ.

Сутӗҫ министрӗн заместителӗ Марин Генков доклад туса панӑ. Унта вӑл ҫакна палӑртнӑ: иккӗмӗш ҫурӑ ҫул хушшинче 17.824 ҫын вулама, тата ҫырма вӗреннӗ. Халӗ 23.500 ҫын вӗренет. Ҫӗршывра пӗлӗве ӳстермелли 2.730 курс ӗҫлет.

25 округре хутпӗлменлӗха пӗтӗмпех пӗтернӗ. Ҫӗршывӑн ытти 55 округӗнче хут пӗлменсем ҫывӑх вӑхӑтра вӗренсе пӗтереҫҫӗ.

Пекинри савӑнӑҫлӑ лару

ПЕКИН, февралӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Китайпа Совет Союзӗ пӗр-пӗринпе туслӑ пурӑнасси, союзлӑ пуласси тата пӗр-пӗрне пулӑшасси ҫинчен договор туса алӑ пуснӑранпа виҫӗ ҫул тултарнӑ ятпа ӗнер Пекинра савӑнӑҫлӑ лару ирттернӗ. Залра Центральнӑй Халӑх правительствипе Китайри Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн членӗсем, демократиллӗ тата общественлӑ организацисен представителӗсем, литературӑпа искусство деятелӗсем, Ӗҫ Геройӗсем, Халӑх Ирӗклӗхӗшӗн кӗрешекен ҫарӑн Геройӗсем, Совет Союзӗпе халӑх демократи ҫӗршывӗсен дипломатиллӗ представителӗсем, совет специалисчӗсем—пурӗ 1.300 ҫын ытла пулнӑ. Сцена ҫинче—В. И. Ленин, И. В. Сталин, Мао Цзэ-дун тата Сунь Ят-сен портречӗсем, Совет Союзӗпе Китай Халӑх Республикин государство ялавӗсем.

Савӑнӑҫлӑ ларӑва Китайпа Совет Союзӗ хушшинчи туслӑх Обществин председателӗн заместителӗ Го Мо-жо уҫнӑ.

Китайпа Совет Союзӗ пӗр-пӗринпе туслӑ пурӑнасси, союзлӑ пуласси тата пӗр-пӗрне пулӑшасси ҫинчен договор туса алӑ пуснӑранпа виҫӗ ҫул тултарни ҫинчен Китайпа Совет Союзӗ хушшинчи туслӑх Обществин хисеплӗ председателӗ Лю Шао-ци пысӑк доклад тунӑ.

Лю Шао-ци хӑйӗн доклачӗн вӗҫӗнче Китай халӑхӗн ҫулпуҫне Мао Цзэ-дуна тата Китай халӑхӗн чи лайӑх тусне, пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисен аслӑ ҫулпуҫӗпе учительне Сталин юлташа хисеплесе сывлӑх суннӑ. Ларура пулнисем ҫав сӑмахсене тӑвӑллӑн алӑ ҫупса ырланӑ.

Унтан ССР Союзӗн Китай Халӑх Республикинчи послӗ А. С. Панюшкин сӑмах тухса каланӑ.

СССР Китайри экономика строительствине пулӑшни ҫинчен Государство Администраци Совечӗн членӗ Бо И-бо доклад тунӑ.

Савӑнӑҫлӑ ларура пулнисем ССР Союзӗн Министрӗсен Совечӗн Председателӗ И. В. Сталин юлташ патне саламлӑ телеграмма яма йышӑннӑ.

Юлашкинчен Китай артисчӗсем пысӑк концерт панӑ.

Тӑвай районӗнче

☆ Машина-трактор станцинчи трактористсен курсӗнчен 37 ҫын вӗренсе тухрӗ. Халӗ вӗсем тракторсем юсанӑ ҫӗрте ӗҫлеҫҫӗ.

Ҫак уйӑхра трактористсем вӗрентсе хатӗрлемелли тепӗр курс уҫӑлчӗ. Курсра занятисем йӗркелле иртеҫҫӗ.

☆ Перекет кассинче кварталти плана ирттерсе тултарассишӗн социализмлӑ ӑмӑрту сарӑлса пырать. Пӗррӗмӗш квартална вкладсем пухмалли плана перекет касси пӗр уйӑх хушшинче 120 процент пурнӑҫларӗ.

☆ Эльпуҫӗнчи сичӗ ҫул вӗренмелли шкулта 4 класлӑ ҫӗнӗ ҫурт туса пӗтерчӗ. Кӑҫал кунта вӑтам шкул уҫма класем ҫитеҫҫӗ.

А. НИКОЛАЕВ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

СССР халӑх хуҫалӑхне юсаса малалла аталантармалли виҫҫӗмӗш государственнӑй заем

9-мӗш вылявра выигрышсем тухнине кӑтартакан СПРАВКА-ТАБЛИЦА

Выляв 1953 ҫулхи февралӗн 8-мӗшӗнче Курган хулинче пулнӑ.

Таблицӑра 100 тенкелӗх облигацисем ҫине выигрышсем тухнине кӑтартнӑ. Выигрыш суммине выляса илнӗ облигаци хакӗ те кӗрет.

Заемӑн мӗнпур 226 разрядӗнчи ҫак серисемпе облигацисен номерӗсем ҫине выигрышсем тухнӑ:

Сери №№	Облигаци №№	Мисе тенкӗ	Сери №№	Облигаци №№	Мисе тенкӗ
040164	19*)	1.000	049513	1—50	500
040208	1—50	200	049583	24*)	1.000
040234	01*)	10.000	049662	1—50	200
040307	1—50	200	049675	34*)	1.000
040463	17*)	1.000	049730	26*)	1.000
040490	08*)	1.000	049909	39*)	1.000
040495	13*)	1.000	049957	1—50	200
040556	1—50	200	050022	43*)	1.000
040567	1—50	200	050268	1—50	500
040708	1—50	500	050278	47*)	1.000
040870	1—50	200	050660	14*)	1.000
040876	19*)	1.000	050703	17*)	10.000
040923	1—50	200	051060	27*)	1.000
041089	50*)	1.000	051173	1—50	500
041111	17*)	1.000	051317	1—50	500
041179	1—50	200	051332	06*)	1.000
041299	06*)	1.000	051438	20*)	1.000
041324	21*)	5.000	051478	41*)	1.000
041815	28*)	1.000	051617	1—50	200
041853	1—50	200	051904	02*)	1.000
042016	39*)	1.000	051974	1—50	500
042030	23*)	1.000	051977	16*)	1.000
042040	14*)	5.000	052012	05*)	1.000
042093	1—50	200	052309	32*)	1.000
042149	1—50	200	052367	03*)	1.000
042263	1—50	200	052396	1—50	500
042368	17*)	5.000	052407	40*)	1.000
042377	25*)	1.000	052464	05*)	5.000
042392	40*)	1.000	052702	1—25	200
042504	27*)	1.000	053067	34*)	1.000
042590	1—50	500	053397	1—50	200
042647	07*)	1.000	053430	04*)	1.000
042766	37*)	1.000	053527	37*)	1.000
042878	27*)	50.000	053541	13*)	1.000
043109	05*)	1.000	053546	12*)	5.000
043129	24*)	1.000	053549	1—50	500
043254	24*)	1.000	053596	13*)	1.000
043321	19*)	1.000	053625	15*)	1.000
043401	37*)	1.000	053707	03*)	1.000
043791	1—50	200	053929	33*)	1.000
043976	11*)	1.000	054008	24*)	1.000
043996	36*)	1.000	054086	1—50	200
044068	14*)	1.000	054208	1—50	500
044413	34*)	25.000	054329	1—50	200
044458	10*)	1.000	054330	1—50	200
044627	15*)	1.000	054371	50*)	1.000
044795	34*)	1.000	054494	33*)	1.000
044965	1—50	200	054676	18*)	1.000
045074	17*)	1.000	054830	25*)	1.000
045139	1—50	200	054953	01*)	1.000
045329	48*)	1.000	055004	37*)	1.000
045547	1—50	200	055128	20*)	1.000
045639	04*)	1.000	055131	1—50	500
045647	15*)	1.000	055182	45*)	1.000
045667	31*)	1.000	055458	25*)	1.000
045671	1—50	200	055789	37*)	1.000
046025	1—50	500	055850	1—50	200
046094	1—50	200	055993	1—50	500
046246	25*)	25.000	056016	39*)	1.000
046271	24*)	1.000	056020	17*)	10.000
046316	04*)	1.000	056143	50*)	1.000
046499	20*)	1.000	056175	08*)	1.000
046549	17*)	1.000	056295	41*)	1.000
046551	26*)	1.000	056447	1—50	200
046682	1—50	200	056449	40*)	1.000
047136	11*)	1.000	056805	1—50	200
047212	13*)	10.000	056841	48*)	1.000
047279	01*)	1.000	057004	17*)	1.000
047398	29*)	1.000	057571	1—50	500
047525	06*)	1.000	057953	34*)	1.000
047634	31*)	1.000	058034	18*)	1.000
047778	1—50	200	058267	02*)	1.000
047852	18*)	1.000	058443	1—50	200
047882	35*)	1.000	058478	1—50	200
047985	11*)	5.000	058632	31*)	5.000
048108	27*)	1.000	058766	11*)	10.000
048154	1—50	500	058788	1—50	500
048160	1—50	200	058842	22*)	1.000
048476	1—50	200	058948	50*)	1.000
048511	1—50	500	059003	40*)	1.000
048775	1—50	500	059082	15*)	5.000
048795	1—50	200	059088	41*)	1.000
048804	1—50	500	059166	49*)	5.000
048973	1—50	500	059286	31*)	1.000
049009	40*)	1.000	059610	43*)	1.000
049148	40*)	5.000	059821	45*)	1.000
049238	36*)	1.000			

*) Ҫак серие кӗрекен облигацисен ытти 49 номерӗ 200-шер тенкӗ выляса илнӗ.

ЧӐВАШ АССР ПЕРЕКЕТ КАССИСЕМПЕ ГОСУДАРСТВО КРЕДИЧӖН УПРАВЛЕНИЙӖ.

ПӖЛТЕРНИ

Февралӗн 17-мӗшӗнче, 20 сехетре, партин Шупашкар хула комитечӗн библиотека ҫуртӗнче консультантсен тата парти историне марксизм-ленинизм классикӗсен произведенийӗсем тӑрӑх вӗренмелли кружоксен (пӗрремӗшпе иккӗмӗш ҫул ӗҫлекенисен) руководителӗсен семинарӗ пулать. Тема: «Коммунистсен партийӗ—совет обществин ертсе пыракан вӑйӗ, ССР Союзӗнчи коммунизм строительствин организаторӗ тата хавхалантаракanӗ».

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧӖ.

ЧӐВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРӖНЧЕ
Февралӗн 17-мӗшӗнче—чӑвашла спектакль «НАЗАР СТОДОЛЯ»
Февралӗн 18-мӗшӗнче—вырӑсла спектакль «БОГАТЫРСКИЙ СКАЗ»
ЧАСАХ!—чӑвашла спектакль «ВИҪӖ ТУЙ»
Спектакльсем 20 сехетре пуҫланаҫҫӗ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителӗ—3-90, ответлӑ секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—5-74, парти пурнӑҫ пайӗ—3-99, ялхуҫалӑх пайӗ—3-97, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ 7-32, издательство кантурӗ—0-23.

НТ 01291 Типографи №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.